[illegible stamp]

1938 ҪЕНТ̆АБӖР 4
ВЫРСАРНИКУН
204(5017) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммунӗ

21-мӗш ҫул тухат̆

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн хаҫачӗ

Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Небоксар, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—87, ред. заместителӗн—3—97, редакци секретарӗн—4—40, парти пурнӑҫ пайӗн—0—85, йалхуҫалӑх пайӗн—4 — 97, советсен чӗлӗн—0—88, промышлӗннӑҫ пайӗн—7—97, йалкорсен пайӗн—2—30, дежурнӑйӗн — 6—23.

Чукунҫул строителствинчи стаханӑвла ҫирӗмкунлӑха лайӑх хатӗрленсе иртерер

Пайан епӗр Шупашкар районӗнчи йалсовет, колхоз председателӗсен канашлӑвӗ Канаш—Шупашкар чукунҫул строителствинче стаханӑвла ӗҫлеме чӗнсе каланине тата Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б) Парти Обком бӳровӗ „Канаш—Шупашкар чукунҫул строителствинче стаханӑвла ҫирӗмкунлӑх иртересси ҫинчен" йышӑннӑ постановленине пичетлесе кӑларат̆пӑр. Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе Парти Чӑваш Обкомӗ чукунҫул строителствинче ӗҫлекен рабочисен, колхозниксен, Шупашкар районӗнчи йалсовет тата колхоз председателӗсен пуҫарӑвне ырласа, чукунҫул строителствинче ҫент̆абӗрӗн 10-мӗшӗнчен тытӑнса стаханӑвла ҫирӗмкунлӑх иртермеле тунӑ.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Обкомӗ рабочисемпе колхозниксен пуҫарӑвӗ тӑрӑх чукунҫул строителствинче стаханӑвла ҫирӗмкунлӑх иртерме йышӑнни—чукунҫула партипе правителствӑ кӑтартса панӑ срукра—окт̆абӗрӗн 1-мӗшӗ тӗлне—туса пӗтерсе вӑхӑтлӑха експлоатацине памала тӑвас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат̆. Ҫак йенчен илсен тата стаханӑвла ҫирӗмкунлӑх вӑл хӑй те чукунҫула тӑвассине татса паракан тапхӑрта иртнине хисепе илсен—унӑн пахалӑхӗ мӗн пек пысӑкки тата вӑл мӗн пек вӑхӑтра пулни пуриншӗн те паллӑ. Ҫавӑнпа ӑна тӗплӗн хатӗрленсе иртерни кирлӗ.

Стаханӑвлӑ ҫирӗмкунлӑх вӑл, ӑна пур йенчен те кирлӗ пек хатӗрленсе иртерсен ҫеҫ лайӑх ҫитӗнӳсем пама пултарат̆. Ӗҫ участкисене, ӗҫ вырӑнӗсене тӗплӗн хатӗрлемеле, инструментсем, ӗҫ хатӗрӗсем ҫителӗклӗ тӑратмала, механизмсене пӗр чарӑнусӑр ӗҫлекен тумала, рабочисем ваљљи куљтурӑпа йӑла условийӗсем туса памала, техникӑ тӗлӗшпе йертсе пырассине вӑйлатмала, политикӑлӑ-массӑлӑ агитаци ӗҫне ҫӳлӗ вырӑна ҫӗклемеле, — акӑ мӗн татса парат̆ стаханӑвла ҫирӗмкунлӑхӑн ӑнӑҫлӑхне.

Стаханӑвла ҫирӗмкунлӑх пуҫланиччен пурӗ те 6 кун ҫеҫ йулчӗ. Пайанах чукунҫул строителствин пур участкисенче, бригадӑсенче стаханӑвла ҫирӗмкунлӑх хушшинче мӗн-мӗн тумалине пур йенчен те кӑтартса хатӗрленӗ плансем, графиксем туса хумала. Строителствӑ управленийӗн, участкӑсен руководителӗсен, партипе профсойуз организацисен тата инженерлӑ-техникӑлӑ работниксен пӗтӗм коллектива стаханӑвла ӗҫлеме кирлӗ условисене пурне те хатӗрлесе ҫитермеле.

Стаханӑвла ҫирӗмкунлӑх умӗнче тӑракан задачӑсене ӑнӑҫлӑн татса парас тесен, строителствӑра ӗҫ вӑйӗ ҫителӗклӗ пулни кирлӗ. Кутаранччен ӗҫ вӑйӗ пӗрмайах улшӑнса тӑни строителствӑна пысӑк чӑрмав кӳнӗ. Стаханӑвла ҫирӗмкунлӑх вӑхӑтӗнче ҫавнашкал чӑрмав пулмала мар. Канаш—Шупашкар чукунҫулне тӑвас ӗҫ Чӑваш республикӗнчи пӗтӗм ӗҫҫыннисен хисеплӗ ӗҫӗ. Партипе профсойуз организацисен, советсен, колхозсен чукунҫула вӑхӑтра туса пӗтерес ӗҫе хӗрӳллӗн хутшӑнса ӗҫлемеле. Колхозниксемпе йединоличниксене чукунҫул ҫинче ӗҫлеме 2—3 кунлӑха ҫеҫ мар, нумай вӑхӑтлӑха организацилесе илсе тухмала тӑвас пулат̆.

Пӗтӗм колхозниксем чукунҫула хӑвӑртрах туса пӗтерессишӗн ҫунаҫҫӗ. Ҫавӑн ҫинчен калат̆ те ӗнтӗ Шупашкар районӗнчи колхозниксен тата йалсоветсемпе колхоз председателӗсен чаплӑ пуҫарӑвӗ. Чукунҫул строителствинче халӗ ӗҫлекен рабочисемсӗр пуҫне куллен 3350 ҫын пулмала.

Шупашкар районӗн пуҫарӑвне республикӑри пӗтӗм ӗҫҫыннисем, уйрӑмӑнах—Канаш, Шӑхасан, Трак, Ҫӗрпӳ, Ишлей т. ыт. районсенчи ӗҫҫыннисем кӗске вӑхӑтрах йышӑнса чукунҫул строителствине ӗҫ вӑйӗ ҫителӗклӗ парас пирки иккӗленмели ҫук. Шупашкарпа Ишлей районӗнсенчи чылай колхозсем чукунҫул ҫине ӗҫ вӑйӗ организацилесе йама пуҫланӑ та ӗнтӗ.

Стаханӑвла ҫирӗмкунлӑхра уйрӑмӑнах комсомолӑн пысӑк вырӑнта пулмала. Строителствӑра халӗ те хӑйсен пултарулӑхӗпе мала тухнӑ комсомолӗцсем сахал мар. Тарасӑв, Рубцовӑ тата ытти комсомолӗцсем чӑннипех социалисӑмлӑ ӗҫ меслечӗсене кӑтартаҫҫӗ. Комсомол организацисен чыслӑ ӗҫӗ вӑл—комсомолӗцсен ҫӗнӗ ҫарне чукунҫул строителствинче ӗҫлеме организацилесе йарасси пулат̆.

Социалисӑмлӑ ӑмӑртупа стаханӑвла йухӑма ҫӗклесе пымали тӗп меслет—политикӑлӑ-массӑлӑ агитаци ӗҫне вӑйлатнинче. Хӗрлӗ кӗтессем, радиосем, вулавҫӑсем пӗр чарӑнусӑр ӗҫлеччӗр. Ҫтена хаҫачӗсем вӑхӑтра тухса тӑччӑр. Халљхи вӑхӑтри пек хаҫат-журналсене виҫӗ-тӑватӑ кун хушшинче ҫеҫ рабочисем патне ҫитерни ан пултӑр.

ПСК(б) Парти Тӗп Комитечӗ 1937 ҫулхи декабӗр уйӑхӗнче „Мускавпа Мускав облаҫӗнчи хапрӑксавӑтсенчи стаханӑвӗцсем чӗнсе каланӑ пирки" йышӑннӑ постановленире стаханӑвла ернесем, уйӑхлӑхсем мӗнле ирттермелине питӗ те тӗплӗн кӑтартса панӑ. „...Стаханӑвла йухӑмӑн пур ернисемпе уйӑхлӑхӗсем те стаханӑвла йухӑмӑн пӗр пӗчӗк пайне ҫеҫ ҫавӑрса илекен рекордҫменсене ҫеҫ мар, пур стаханӑвӗцсене те тивмеле, ерне йе уйӑхлӑх вӑхӑтӗнче стаханӑвӗцсен ретне сарасси чи кирлӗ задачӑсенчен пӗри пулат̆ тесе шутламала". Стаханӑвла йухӑмӑн вӑйӗ—массӑлӑхра. Ҫак ҫирӗмкунлӑхра ҫӗнӗрен темиҫе ҫӗршер стаханӑвӗцсем ӳстерсе ҫитӗнтермеле. Апла тума чукунҫул строителствинче ӗҫлекенсене пурне те социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнтарни кирлӗ.

Стаханӑвла ҫирӗмкунлӑха республикӑри пӗтӗм партипе совет, профсойуз, хуҫалӑх организацисен хутшӑнмала. Уйрӑмӑнах сутуилӳ, сывлӑха сыхлав, ҫутӗҫ тата куљтурӑ организацисем умӗнче пысӑк та чыслӑ задачӑсем тӑраҫҫӗ. Суту-илӳ Халӑх Комиссариачӗн, Чӑвашсойузӑн, Чӑвашторгӑн хӑйсен ӗҫне пур участкӑсенче те кӑтартулӑ организацилемеле. Ҫугӗҫ организацисен рабочисем хушшинче куљтурӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе тивӗҫлӗ вырӑна лартма пулӑшмала.

Стаханӑвла ҫирӗмкунлӑха пур йенчен те тӗплӗн хатӗрленсе ӑна пысӑк пултарулӑхпа иртерес задачӑ тавра рабочисене, колхозниксене, ӗҫҫыннисене мобилизацилесе, чукунҫула октабӗрӗн 1-мӗшӗ тӗлне вӑхӑтлӑх, еxплоатацине памала тӑвасси — партипе совет, профсойуз, комсомол организацисен хисеплӗ те чыслӑ ӗҫӗ пулат̆.

Канаш—Шупашкар чукунҫул строителствинче стаханӑвла ҫирӗмкунлӑх иртересси ҫинчен

ЧАССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Обком бӳровӗ 1938 ҫулти ҫент̆абӗрӗн 1-мӗшӗнче йышӑннӑ

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Обком бӳровӗ ҫапла йышӑнаҫҫӗ:

1. Чукунҫул ҫинче ӗҫлекен рабочисен, колхозниксен, Шупашкар районӗнчи колхозсемпе йалсовет председателӗсен районри пухӑвӗн пуҫаруне ырласа, ҫент̆абӗрӗн 10-мӗшӗнчен пуҫласа окт̆абӗрӗн 1-мӗшне ҫитиччен Канаш—Шупашкар чукунҫул строителствине туса пӗтерес тӗлӗшпе стаханӑвла ҫирӗмкунлӑх ирттермеле тӑвас.

2. Строителствӑна туса пӗтерме халљхи вӑхӑтра ӗҫлекен рабочисемсӗр пуҫне тата 3350 ҫын кирлӗ. Ҫакна шута илсе Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫак ҫулти августӑн 13-мӗшпе 19-мӗшӗнче чукунҫул линийӗ каҫакан районсенчен чукунҫул строителстви ваљљи ӗҫ вӑйӗ пухмали план ҫинчен йышӑннӑ постановленине ҫирӗплетес.

Чукунҫул строителстви ваљљи организацилӗн ӗҫ вӑйӗ пухса тӑратмашкӑн чукунҫул лини сывӑхӗнчи районсене ҫак строителствӑ участкисем ҫумне ҫирӗплетес:

Шупашкар районӗ — Шупашкар станципе чукунҫулӗ—0 километртан пуҫласа 10 километра ҫити тата 26 килеметртан пуҫласа 30 километра ҫити.

Ишлей районӗ—11 километртан пуҫласа 25 километра ҫити.

Ҫӗрпӳ районӗ—31 километртан пуҫласа 55 километра ҫити.

Трак районӗ—56 километртан пуҫласа 73 километра ҫити.

Шӑхасан районӗ—74 километртан пуҫласа 90 километра ҫити.

Канаш районӗ—91 километртан пуҫласа 101 километра ҫити.

Тата ҫӗнӗрен: Ҫӗрпӳ районӗнчи участкӑ ҫумне—Вӑрмар районне; Шупашкар районӗнчи участка ҫумне — Сӗнтӗрвӑрри районне; Канаш районӗнчи участкӑ ҫумне—Тӑвай районне ҫирӗплетес.

Ҫакӑнта асӑннӑ ПСК(б)П райкомӗсем ҫине хӑйсен районне ҫирӗплетсе панӑ участкӑсем ҫинче ӗҫлекен строителсем хушшинче куљтурӑлӑ-массӑлӑ ӗҫсене туса пырассишӗн ответлӑх хурас.

3. Строителствӑ начаљникне—Вавилкин йулташа, партком ҫекретарне—Никитин йулташа, парти райкомӗсемпе райӗҫтӑвкомӗсене халех кирлӗ пек организацилӗ тата куљтмассӑлӑ ӗҫсене сарса йани тӑрӑх стаханӑвла ҫирӗмкунлӑха лайӑх хатӗрленмеле тума хушас.

4. Строителствӑна практикӑлла пулӑшу памашкӑн ҫирӗмкунлӑха иртернӗ вӑхӑта строителствӑ участкисене ПСК(б)П Обком бӳровӗн членӗсемпе правителствӑ членӗсене йарас.

Канаш—Шупашкар чукунҫулне туса пӗтерессине уйрӑмах пысӑк ӗҫ вырӑнне хурса, Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Обкомӗ чукунҫул строителствинче ӗҫлекен рабочисене, инженерлӑ-техникӑлӑ работниксене, колхозниксене, колхозницӑсене, йединоличниксене, коммуниссемпе комсомолӗцсене стаханӑвла ҫирӗмкунлӑха хастарлӑн хутшӑнса, Каганович йулташ Канаш—Шупашкар чукунҫулне окт̆абӗрӗн 1-мӗшӗ тӗлне вӑхӑтлӑха еxплоатацине памала тӑвасси ҫинчен кӑларнӑ приказа чыслӑн пурнӑҫа кӗртме чӗнет.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗ А. ВОЛКӐВ.
ПСК(б)П Чӑваш Обком ҫекретарӗ Г. ИВАНОВ.

Шупашкар районӗнчи йалсовет тата колхоз председателӗсен августӑн 27-мӗшӗнче пулса иртнӗ канашлӑвӗ Канаш—Шупашкар хушшинчи чукунҫул строителствине кӑҫалхи ҫулӑн окт̆абӗрӗн 1-мӗш тӗлне туса пӗтересси пирки

ЧӖНСЕ КАЛАНИ

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул линийӗ Чӑваш республикӗн хуҫалӑхне тата куљтурине малала ӳстерсе пырас ҫӗрте калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат̆. Вӑл чӑваш халӑхне ваљљи ҫӗнӗ телей илсе килет. Ҫав ҫул пирӗн республикӑ Аслӑ Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӑсен Союзӗн малта пыракан облаҫӗсемпе ҫыхӑнса тӑрассине вӑйлатакан ҫул пулса тӑрат̆. Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫула тӑвасси пӗтӗм чӑваш халӑхӗн ӗҫӗ пулат̆. Чукунҫула туса пӗтерессине Чӑваш республикӗнчи рабочисем, колхозниксем, интеллигентсен пурте кӗтеҫҫӗ.

ССР Сойузӗн Ҫулйӗр Халӑх Комиссарӗ Л. М. Каганович йулташ Канаш—Шупашкар хушшинчи чукунҫулне 1938 ҫулхи окт̆абӗрӗн 1-мӗш тӗлне вӑхӑтлӑх еxплоатацине парасси ҫинчен кӑларнӑ приказа пурнӑҫлас май ЧАССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ постановлени ҫинчен сӳтсе-йавнӑ хыҫҫӑн, Шупашкар районӗнчи йалсовет тата колхоз председателӗсен канашлӑвӗ чукунҫул строителствинче ӗҫ вӑйӗ ҫителӗксӗр пулнипе Каганович йулташ приказне пурнӑҫласси хӑрушлӑхра тӑрат̆, тесе палӑртат̆. Ҫавӑнпа та чукунҫул строителствине ҫителӗклӗ таран ӗҫ вӑйӗ парасси совет органӗсен тата колхозсен пирвайхи задачи пулмала. Ҫакӑ советсен тата колхозсен ӗҫӗсенче тӗп вырӑн йышӑнса тӑмала, чукунҫул строителствине ӗҫ вӑйӗ парассине чӑрмантарма нимӗнле урӑх ӗҫ те сӑлтав пулма пултараймаст̆.

Ҫент̆абӗр уйӑхӗ строителствӑ ӗҫӗсене вӗҫлесе ҫитермели татӑклӑ уйӑх пулса тӑрат̆, епӗр ҫент̆абӗр уйӑхне чукунҫул строителстви йенӗпе стаханӑвла уйӑхлӑх тума кирлӗ тесе шутлатпӑр.

Канашлу районри пур йалсоветсене тата колхозсене ҫент̆абӗрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа чукунҫул строителстви ҫине районри пур колхозсемпе йалсенчен те строителствӑ ӗҫӗсене вӗҫличченех ӗҫлеме массӑлӑн тухассине организацилеме чӗнет.

Канашлу ҫак сӗнӗве пур йалсенче те—колхозниксен, йединоличниксен, строителствӑри рабочисен тата инженерлӑ-техникӑлӑ работниксен пухувӗсенче сӳтсе-йавма ыйтат̆.

Епӗр, йалсоветсемпе колхоз председателӗсем, чукунҫул строителстви ваљљи ӗҫ вӑйне йӗркелӗн пухас ӗҫе активлӑн хутшӑнма, колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче ӑнлантарулӑ ӗҫе пуҫарса пыма, чукунҫул строителстви управленин представителӗсем колхозсемпе тата йединоличниксемпе догӑвӑрсем тунӑ ҫӗрте вӗсене пур йенчен те пулӑшса пыма сӑмах паратпӑр.

Канашлу Шупашкар районӗнчи пур колхозниксене тата ӗҫҫыннисене чукунҫул строителствинче хастарлӑ ӗҫлесе, Чӑваш правителствин куҫса ҫӳрекен хӗрлӗ йалавне илессишӗн кӗрешме, Шупашкар районӗн территоринчи чукунҫул лини ӗҫӗсене срукчен туса ҫитерме чӗнет.

Шупашкар районӗнчи йалсовет тата колхоз председателӗсен канашлӑвӗ Ишлей, Трак, Ҫӗрпӳ, Шӑхасан, Канаш районӗсенчи пур колхозниксене тата ӗҫҫыннисене те Канаш—Шупашкар хушшинчи чукунҫула окт̆абӗрӗн 1-ш тӗлне вӑхӑтлӑх еxплоатацине парас майпа иртекен стаханӑвла уйӑхлӑха паттӑрӑн хутшӑнма чӗнет.

Канашлу президиумӗ.

Чехословакири лару-тӑру

Генлейнӑвӗцсем хӗҫпӑшаллӑ выступлени тума хатӗрленеҫҫӗ

Ҫент̆абӗрӗн 1-мӗшӗнче Чехословакири гитлӗрӑвӗцсен пуҫлӑхӗ Генлейн Гитлӗрпа тата унӑн тарҫисемпе—Геспа, Герингпа, Геббељспа тата Риббентроппа курса калаҫма Германине тухса кайнӑ.

Генлейн Германирен таврӑнсан Судет-Нимӗҫ партийӗ Чехословаки правителстви умне ҫӗнӗ требованисем кӑларса тӑратмала, ҫав требованисем тӑрӑх вара генлейнӑвӗцсем правителствӑпа калаҫусем тума килӗшмеле, тесе шутлаҫҫӗ.

Франци пичечӗ ҫапла шутлат̆: фашисла Германи калаҫусене Германишӗн йурӑхлӑ вӑхӑтра чарса лартас шутпа Чехословакире провокацисем тума чарӑнас ҫук. Калаҫусем пулманнишӗн Чехословакине айӑпласа, нимӗҫсем унпа калаҫусем тума май ҫук, тесе пӗлтерӗҫ.

Прагӑран илнӗ хыпарсем тӑрӑх, Генлейн партине йертсе пыракансем хушшинче Германи Чехословакине хирӗҫ хӗҫпӑшалпа тухма провокаци тӑвас шутпа пӑлхав хатӗрлес ыйтӑва сӳтсе-йаваҫҫӗ. Пӑлхав тумали плана пур йенчен те тӗплӗн туса хатӗрленӗ.

Генлейнӑвӗцсем пӑлхава уҫҫӑнах хатӗрленеҫҫӗ. Чикӗ урлӑ кашни кунах хӗҫпӑшалсем турттарса илсе пыраҫҫӗ. Сиктерсе йаракан йапаласем тийенӗ вуншар машинӑсем Германирен контрабандӑпа илсе килеҫҫӗ. Пиншер генлейнӑвӗцла штурмовиксем чикӗ хӗррине пырапыра тулаҫҫӗ.

Фашисла Германи Чехословаки республикӗн шалти ӗҫӗсене пӳтсӗрӗн хутшӑнни Чехословаки халӑхне ҫӗнӗрен хыттӑн тарӑхтарса йанӑ. Чехословаки обшчественӑҫӗ шалти ӗҫсен министерствин органӗсем хӑйсене йӗркесӗр тыткаланинчен тӗлӗнет, мӗншӗн тесен генлейнӑвӗцсем вӗсен куҫӗ умӗнчех пӑлхав тума хатӗрленеҫҫӗ. Чехословаки обшчественӑҫӗ ҫав министерствӑра йӗркелӗх тума ыйтат̆.

(ТАСС).

40 сехетлӗ ӗҫ ерни ҫинчен йышӑннӑ саккуна пӑснине хирӗҫ протеслеҫҫӗ

Францире 40 сехетлӗ ӗҫ ерни ҫинчен кӑларнӑ саккуна пӑснине хирӗҫ тӑвакан протессен йухӑмӗ сарӑлсах пырат̆.

Протест революцийӗсене Пӗтӗмӗшлӗ Ӗҫ Конфедерацийӗ, Париж районӗнчи коммунисла тата социалисла партисен килӗшӳ комитечӗ, халӑх фрончӗн комитечӗсем, профсойуссен тата ытти организацисем йышӑннӑ.

Ҫент̆абӗрӗн 2-мӗшӗнче Парижре 40 сехетлӗ ӗҫ ерни ҫинчен йышӑннӑ саккуна пӑснине протеслесе митинг пулса иртнӗ. Митингра 25 пин ҫын пулнӑ.

Уйрӑм предприйатисенчи рабочисем митинга организацилене ушкӑнсемпе, „Епӗр 40 сехетлӗ ӗҫ ернишӗн тӑратпӑр!", „Даладйене отставкӑна!" текен лозунгсемпе пынӑ.

Протест митингӗсемпе демонстрацийӗсем пӗтӗм ҫӗршыв тӑрӑх пулса иртеҫҫӗ.

(ТАСС).

Хӗрлӗ Ҫар призывӗ

„Сывлӑху ҫирӗп, ҫара илес"

ЙЕТӖРНЕ. Ҫент̆абӗрӗн пӗрремӗшӗ. Йетӗрнери оборонӑ ҫурчӗ плакатсемпе, лозунгсемпе тумланнӑ. Алӑк умӗнче радио Мускав шавӗпе йанӑрат̆.

Сакӑр сехет. 1917 ҫулта тата 1918 ҫулти малтанхи ҫурҫулта ҫуралнӑ хулари ҫамрӑксем пурте хула совечӗ умне пухӑнчӗҫ. Вӗсен пурин те пӗр шухӑш—тӑван ҫӗршыва сыхлама кайасси. Ҫак шухӑшпа призывниксем телейлӗ ҫӗршывӑн ҫӗнтерӳ йуррисене йурласа, оборонӑ ҫурчӗ патне утрӗҫ...

Шӑп 9 сехет. Призыв пуҫланчӗ. Чи малтанах призыва 1917 ҫулта ҫуралнӑ Н. Шчетинин йулташ кӗчӗ.

— Сывлӑху ҫирӗп. Сире ҫара илес,—тесе пӗлтерчӗ Шчетинин йулташа призыв комиҫҫийӗ.

Шчетинин пайан нихӑҫанхинчен те савӑнӑҫлӑ, мӗншӗн тесен вӑл тӑван ҫӗршыва сыхлама кайат̆.

— Ӗлӗк патша ҫарне ҫамрӑксем макӑрса кайнӑ. Пурнӑҫ мар, вӗсене вилӗм, нуша кӗтнӗ. Ҫамрӑксен ҫара кайас кӑмӑл пулман. Халӗ пачах урӑх. Тӑван ҫӗршыва сыхласси—кашни совет гражданинӗн мухтавлӑ та хисеплӗ тивӗҫлӗхӗ. Ӑна пирӗн ҫамрӑксем пурте аван пӗлсе тӑраҫҫӗ. Епӗ те тӑван ҫӗршыва сыхлама кайатӑп. Тӑшман пирӗн ҫӗршыв ҫине урине пусма хӑйсан, пӗтӗм вӑйа хурса, кирлӗ пулсан, пурнӑҫа шеллемесӗр вӗсене ҫапса аркатиччен кӗрешетӗп,—терӗ Шчетинин йулташ призыв комиҫҫийӗнчен тухнӑ хыҫҫӑн.

Призыв комиҫҫийӗнчен призывниксем хӗпӗртесе тухаҫҫӗ:

— Мана сывлӑш ҫарӗнчи полковӑй шкула илчӗҫ. Љотчик пулатӑп,—тесе савӑнат̆ призывник Леонтйӗв Ваҫилий. Призывниксем чылайӑшӗ призыва ӗҫри ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илнӗ. Йетӗрнери ҫуҫапакан савӑтри радиомонт̆ор Виноградӑв йулташ призыв пуҫланиччен 70 радиоточкӑран 100 радиоточкӑна ҫитерме обйазателствӑ илнӗ. Вӑл ку обйазателствӑна тултарнӑ. Хучаш йалсоветӗнчи ҫитӗнвисен шкулӗнче ӗҫлекен Леонтйӗв Ваҫилий жута сахал пӗлекен 35 ҫынна шкултан вӗрентсе кӑларнӑ.

Призыв пункчӗ призывниксене лайӑх кӗтсе илнӗ. Унтах буфет, гармоњ, биллиард, шашкӑ-шахмӑт т. ыт. пур.

Призыв пункчӗн пӳлӗмӗсенче призывниксем тӗрлӗрен калаҫусем, докладсем итлеҫҫӗ. Малтанхи кун призывниксем Китай халӑхӗ Йапони захватчикӗсемпе паттӑрӑн кӗрешни ҫинчен парткабинет пуҫлӑхӗ Вахрамейӗв йулташӑн докладне итленӗ. Ҫавнашкалах докладсем тӗрлӗ ыйтусем тӑрӑх пулаҫҫӗ. Докладсем тума ПСК(б) Парти райкомӗ уйрӑм ҫынсене уйӑрнӑ. Сӗтел ҫинче тӗрлӗрен хаҫатсемпе журналсем, унтах призывниксем хӑйсен облигацийӗсене тӗрӗслеме, кирлӗ кӗнекесем туйанма пултараҫҫӗ.

Районри Осоавиахим Совечӗ оборонӑ значокӗсен нормисене парассине организациленӗ. Призывниксенчен чылайӑшӗ ПВХО тата „Ворошиловский стрелок" значокӗсен нормисене панӑ.

Ник. Цветков.

Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн VII-мӗш пленумӗ уҫӑлнӑ

Ҫент̆абӗрӗн 2-мӗшӗнче Мускавра Сойузсен Ҫуртӗн Октабӗрски залӗнче Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн VII-мӗш Пленумӗ уҫӑлнӑ. Пленум ӗҫӗсене Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн членӗсемсӗр пуҫне профсойузсен Тӗп комитечӗсемпе облаҫсенчи комитетсен председателӗсем, ҫавӑн пекех тата Совет Сойузӗнчи пысӑк предприйатисенчи профсойуз организацисен представителӗсем хутшӑнса ӗҫлеҫҫӗ.

Сойузсен Ҫуртӗн Колоннӑллӑ залне Мускаври предприйатисенчи стаханӑвӗцсем, столицӑри профсойуз организацисен активисӗсем пухӑннӑ. Пленум ларуне Колоннӑллӑ зала радио тӑрӑх трансљацийе панӑ.

Пленум кун йӗркинче—Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн VI-мӗш Пленумӗ йышӑннӑ решенисене пурнӑҫа кӗртни ҫинчен доклад, профсойузсен типлӑ уставӗ ҫинчен, Ленинградри „Электросила" савӑтрипе Мускаври атӑ пушмак тӑвакан „Буревестник" хапрӑкӗнчи социаллӑ страховани совечӗсен ӗҫӗсем ҫинчен.

Кун йӗркинчи малтанхи ыйтупа Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн ҫекретарӗ Шверник йулташ доклад туса панӑ.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммуниссен районри пухăвĕ

ЙĔПРЕÇ. Августăн 29-мĕшĕнче парторганизацин районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху партине çĕнĕ членсем илесси, тĕнчери лару-тăрусем тата отчотпа суйлав пухăвĕ коммуниссен политвĕренĕвĕ çинчен йышăннă решенисене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен сÿтсе-йаврĕ.

Парторганизацин районри отчотпа суйлав пухăвĕ парти вĕренĕвĕ çинчен йышăннă решенисене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен ПСК(б) Парти райкомĕн пĕрремĕш çекретарĕ Михайлăв йулташ доклад туса панă хыççăн, пренире 8 çын тухса каларĕç. Вĕсем отчотпа суйлав пухăвĕ иртнĕренпе парти вĕренĕвĕн ĕçĕнче чылай улшăнусем пулнине палăртрĕç.

Районра кружок занятисене çÿресси нумай аванланнă. „Красный фронтовик" колхозра тата Йĕпреçре парти историне вĕренмелли кружоксем халиччен çителĕксĕр ĕçлесе пынă пулсан, йулашки вăхăтра ĕçсем чылайах лайăхланнă. Занятисене çÿресси малтанхи вăхăтра 70—75 процент пулнă пулсан, халĕ 85—90 процент. Иртнĕ çулсенче кружоксем çулахи вăхăтра ĕçлемен пулсан, халĕ кружоксенче занятисем вăхăтра иртеççĕ.

Вĕренÿ пахалăхĕ те нумай ÿсрĕ. Коммуниссем занятисене лайăх хатĕрленсе пыраççĕ. Парти членĕ Бурмистрăвă йул. иртнĕ çулсенче начар вĕренсе пынă, халĕ вăл занятисене йĕркелĕ çÿрет, лайăх хатĕрленсе пырат. Парти кандидачĕсем Мартынăв, Куçмин, Çимбирский йулташсем питĕ тăрăшса вĕренеççĕ, халĕ вĕсене парти членне куçарнă.

ПСК(б) Парти райкомĕ, йулашки вăхăтра, коммуниссен пĕлĕвĕсем тăрăх, йалсенчи парторганизацисенче уйрăм кружоксем организациленĕ.

Çавăнпа пĕрлех, комсомол политвĕренĕвне çÿлти вырăна лартас шутпа, ПСК(б) Парти райкомĕ пропагандис ĕçĕнче пултаракан 6 коммуниса комсомол политвĕренĕвĕ ĕçĕнче ĕçлеме уйăрнă.

Агитколлективпа ĕçлессине лайăхлатас йенĕпе ПСК(б)П райкомĕ чылай ĕçсем тунă. Çеминарсем ирттересси, докладсем, лекцисем итлесси йулашки вăхăтра нумай аванланчĕ. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампани вăхăтĕнче районри, йалти активсенчен 48 çынтан лектăрсен группи организациленĕ. Районрипе йалсенчи актив вăйĕпе чылай калаçусем, докладсем, лекцисем туса иртернĕ.

Отчотпа суйлав пухăвĕ иртнĕренпе нумай пуçламĕш парторганизацисенче те ĕçсем аванланнине курма пулат. Акă „Çиçĕм" колхозри парти кандидачĕсен группинех илер (руководителĕ А. Çимбирский йулташ). Кунта отчотпа суйлав пухăвĕччен парти членĕ 2, кандидачĕ 2 тата пĕр сочувствуйущи анчах пулнă. Халĕ парти членĕ 4, кандидатсем 4, сочувствуйущи 2.

Çак организацири коммуниссем парти вĕренĕвне йĕркелĕ çÿреççĕ, занятисене лайăх хатĕрленсе пыраççĕ. Коммуниссем харпăрхăй килĕсенче хаçат-журналсем, художествăлă литературăсем вулаççĕ. Акă 1928 çултанпа (10 çул) колхоз бригадирĕнче ĕçлекен стахановец П. Николайĕв (халĕ вăл парти кандидатне кĕнĕ) йулташах илер. Вăл „Чăваш Коммунĕ", „Крестьянская газета.", „Колхоз пурнăçĕ" хаçатсем çырăнса илет. Занятисене йĕркелĕ çÿрет.

Коммуниссем Ленин—Сталин вĕрентĕвĕпе хĕçпăшалланса пынипе пĕрлех, колхозра партипе правительствă хамăр умма лартнă задачăсене пурнăçлассишĕн хытă тăрăшса ĕçлеççĕ. „Çиçĕм" колхоз районра малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланат. Вăл уйри тырпулсене большевикла пуçтарса кĕртсе патшалăха тырă парас плана августăн 25-мĕшне пĕтĕмпех пурнăçланă. Çĕнĕ займа колхозниксем хушшинче 2310 тенкĕлĕх сарса, уйăн укçине ЧАССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ уçăлнă куна пĕтĕмĕшпех тÿлесе татнă. Кун пек тĕслĕхсем тата ытти пуçламĕш парторганизацисенче те пур.

Çав вăхăтрах пренире тухса калакансем ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине те палăртрĕç. Пропагандиссене час-часах улăштарас йăлана халĕ те пĕтерменнине пула, Кĕлĕмкассинче, Чăрăшкассинче тата Тугайра политграмăтă кружокĕсем сÿнсе ларнă. Пропагандиссен çеминарĕсем вăхăтра иртмеççĕ. Парткабинет учебниксем тăратассипе начар ĕçлет. Пуçламĕш парторганизацисем йалсенчи, тĕрлĕрен предприйатисемпе учреждениясенчи активсем хушшинчи политикăлă-массăлă ĕçе çителĕксĕр организациленĕ. Çавна пула районри парторганизаци начар ÿсет. МТС, Буинскăри хăма çуракан савăтри т. ыт. пуçламĕш парторганизацисенче çак иртнĕ 8 уйăх хушшинче пĕр çынна та парти ретне илмен.

Çак çитменлĕхсене пĕтересси çинчен пуху татăклă решени йышăнчĕ.

Ф. Захарăв.

Парти ретне çĕнĕ членсем илес ĕç

ШĂХАСАН. Партире тăман массă хушшинче партилĕ-политикăлă ĕçе куллĕн туса пырса, парти ретне çĕнĕ членсем илесси парти организацисен чи кирлĕ те тĕп ĕçĕ пулса тăрат. Коммуниссен партипе совет влаçĕн ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекенсене—хамăран таван çĕршывăн чи лайăх ывăль-хĕрĕсене—парти ретне илессишĕн кулленех ĕçлемеле.

Партине çĕнĕ членсем илме пуçланăранпа Шăхасан районĕнчи парторганизацине 27 çын хутшăннă, вĕсенчен 22 çын парти документĕсене алла илнĕ. Çак хушăра хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем чылай ÿсрĕç. Акă, Уйкас Кипĕкри кандидат группи колхозри чи лайăх комсомолецсене, парти ĕçĕшĕн тăракансене 5 çынна парти кандидатне илнĕ. Анчах çав вăхăтрах, чылай пуçламĕш парторганизацисем парти ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе ку таранччен те нимĕн те туман. Уйрăманах, Ентрийалĕнчи, райĕçтăвком тата Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ (уполнаркомзаг) çумĕнчи пуçлемĕш парторганизацисем питех те йапăх ĕçлеççĕ. Çак пуçламĕш парторганизацисенче партине çĕнĕ членсем илме пуçланăранпа пĕр çынна та парти ретне илмен.

Чылай пуçламĕш парторганизацисенче парти ретне çĕнĕ членсем илес ĕç начар пыни акă мĕнрен килет: парторгсемпе коммуниссем партире тăман актив хушшинче партилĕ-политикăлă ĕçе куллен туса пырассине хакламаççĕ, чылай пуçламĕш парторганизацисем партире тăман активран уйăрăлса кайнă. Чи лайăх çынсене парти ретне илес ыйту çине хăшпĕр коммуниссем хăйсен тивĕçлĕ ĕçĕсем çине пăхнă пек пăхмаççĕ.

МТС-ра ĕçре тĕрĕсленнĕ трактăриссемпе комбайнерсем, стахановецсем чылай шутланаççĕ. Вĕсем партине кĕресшĕн. Анчах вĕсен хушшинче партилĕ-политикăлă ĕçе тивĕçлипе организацилемен. Кунта парти ретне кĕме йурăхлă çынсем нумай пулин те кăçал мĕн пурĕ те 4 çынна çеç парти кандидатне илнĕ. Тата çакна та асăнса хăвармала: партине кĕме панă заявленисене вăхăтра пăхса тухмаççĕ. Акă Никифарăв йулташ июль уйăхĕнчех рекомендацисем хатĕрлесе çитернĕ. Анчах унăн ыйтăвне халь те пăхса тухман. Çавăн пекех райĕçтăвком çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче (парторг Салейĕв йул.) Федăрăв йулташăн ыйтăвне икĕ уйăх ытла пăхса тухмасăр тытса усраççĕ.

Парти ретне ÿстерме шанчăклă резерв—комсомол пур. Анчах партине кĕме йурăхлă комсомолецсене парти ретне илме хатĕрлес ĕç çителĕклĕ пулса пымаст. ПСÇЛКС райкомĕ 42 комсомолеца парти кандидатне кĕме рекомендаци панă. Вĕсенчен пайанхи куна 18 комсомолеца çеç парти кандидатне илнĕ. Час-часах партине кĕме хатĕрленекенсем рекомендаци тупаймасăр тытăнса тăраççĕ. Хăшпĕр коммуниссем (Салейĕв, Филиппăв—райĕçтăвком) тĕрлĕрен „сăлтавсемпе" рекомендаци парассинчен пăрăнаççĕ. Чылай комсомолецсем май—июнь уйăхĕнчех документсем, рекомендацисем хатĕрлеме ытăннă, анчах вĕсене пулăшакан пулман пирки, вĕсем пайан куна та рекомендаци сем тупса çитрмене.

Районри парторганизацин парти ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе ĕçе вăйлатмала. Парти райкомĕн, пуçламĕш парторганизацисен, тата коммуниссен тĕп задачĕ—партире тăман массăпа, активпа кулленех çыхăнса ĕçлемеле; кашни сочувствуйущипе, комсомолецпа, стахановецпа уйрăман ĕçлесе, вĕсенчен чи лайăххисене — Ленин—Сталин партийĕшĕн тăнине ĕçре кăтартнисене—парти ретне илмеле.

А. Соловйов.

Комсомол 20 çул тултарнă тĕле

(Комсомолец-красноармейец çырăвĕ)

Пĕтĕм Сойузри Ленинла-Сталинла комсомол октябĕрĕн 29-че 20 çул тултарат. Ку кун пирĕн совет çамрăкĕсемшĕн чи чаплă праçник, вăл кун комсомол хăйĕн 20 çул хушшинче тунă ĕçсене пăхса тухат, хăйĕн ĕçĕсене тĕрĕслет.

Епĕр, Белоруççи çар округĕнчи № чаçри комсомолецсем, ку куна пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илме хатĕрленетпĕр. Пайанхи куна илсен, пур комсомолецсем те социалисăмлă ăмăртăва хутшăннă.

Уйава хатĕрленнĕ май, красноармейецсем хăйсем çине: политикăна „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе, физкультурăна—„отлично" паллăсемпе, çар ĕçне „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренес тесе конкретлă обязательствăсем илчĕç. Пур красноармейецсем те ворошилăвла тĕл перекенсен значокне илме хатĕрленеççĕ.

Ф. Г. Сазанăв.

Парти кандидачĕсене—большевикла воспитани

Партин Фрунзенски райкомĕ (Мускав хули) парти кандидачĕсен районри канашлуне туса иртернĕ.

Канашлура тухса калаçакансенчен чылайĕшĕсем парти кандидачĕсене воспитани парас ĕçе çителĕклĕн туса пыманшăн хăйсен парторганизацисене критикленĕ.

Анчах политикă тĕлĕшĕнчен ÿсесси парти кандидачĕсенчен хăйсенчен те нумай килет. Ун çинчен тухса калаçакан парти кандидачĕ Лукашкинă йулташ (Хĕрлĕ Çарăн Тĕп архивĕ) каласа кăтартнă.

Канашлура пулнисем парти кандидачĕсен канашлуне час-часах пулма, парти уставĕпе программи тата парти историн уйрăм ыйтăвĕсемпе теорилĕ конференцисем организацилеме, парти кандидачĕсем валли пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен докладсем туса пама хушнă.

(ТАСС).

Аслă уйава хисеплесе

Епĕр, Ленинград çар округĕнчи № чаçри красноармейецсем-комсомолецсем, комсомол 20 çул тултарнине кĕтсе илнĕ май, пурте çар ĕçне вĕренес тĕлĕшпе социалисăмлă ăмăртăва хутшăнтăмăр. Социалисăмлă ăмăрту пире çар техникине тата политикăна вĕренме пулăшрĕ. Епĕр „хорошо" паллăсемпе вĕренсе пыратпăр.

Хĕрлĕ Çар ретне килнĕренпе епĕр хамăр пĕлÿлĕхе чылай ÿстертĕмĕр. Пире кунта пурăнма питĕ лайăх, вĕренме çул уçă. Крылов.

Çыхăну кантурĕ çумĕнчи профсойуз организацин ĕçĕ

Профсойузсем—массăлă организаци. Ахальтен мар профсойуз организацисенче пулнă халăх тăшманĕсем профсойузсен йертсе пыракан органĕсене массăран уйăрса йама тăрăшнă. Вĕсем профсойуз органĕсен демократине пăснă, профсойузсен нумай йенлĕ ĕçне хĕстернĕ. Кунашкал фактсем профсойузсен чылай организацисенче пулнă. Елĕк районĕнчи çыхăну кантурĕ çумĕнчи профсойуз организацинех илер. Унта çапла пулнă. Икĕ çул хушшинче пĕр пуху та туса иртермен, рабочисен культурлăхне ÿстерес тĕлĕшпе нимĕле ĕçсем те туман. Социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма пусарса пынă. Çавна пула профсойуз организацин авторитечĕ те пулман.

Профсойузсенчен халăх тăшманĕсене шăлса тăкнă хыççăн, профсойузсенчи йертсе пырас ĕçе çĕнĕ çынсем пычĕç. Вĕсем профсойуз организацисене чăн-чăн массăлă организацисем тăвассишĕн тăрăшрĕç. Ку Елĕк районĕнчи çыхăну кантурĕ çумĕнчи профсойуз организацин ĕçĕнче те уççăн палăрат.

1938 çулччен профсойуз организацинче пĕтĕмпе те 15 член кăна пулнă. Халĕ 35 член шутланат. Вĕсем пурте общĕствăлă ĕçсене активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Павлăв йулташ Осоавиахим Совечĕн председателĕ пулса ĕçлесе, унăн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Профсойуз членĕсем пурте тенĕ пекех политикăна вĕренмели кружоксене çÿреççĕ. Кунта парти историне вĕренмели, политграмăтă тата ытти кружоксем ĕçлеççĕ.

Профсойуз комитечĕн ĕçне план тăрăх пур членсене те массăлă ĕçе активлăн йавăçтарас майпа организациленĕ. Пухусенче час-часах социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăм ыйтăвĕсене тата уйрăм работниксен паха тĕслĕхĕсене сÿтсе-йаватпăр. Ку массăсен активлăхне çĕклет. Çыхăну кантурĕнче стахановла ĕçлекенсем халĕ пĕрерĕн мар, вуншарăн шутланаççĕ. Быкăва йулташ клиентсене 6—7 çекундра ответ парас вырăнне, 4—5 çекундра ответлет. Телеграммăсем илсе çÿрене çĕрте ĕçленĕ Илларионăвă йулташ кĕске вăхăтрах коммутатăр çинче ĕçлеме вĕренчĕ. Шĕмшешри çыхăну уйрăмĕнчи телефонистка Андрейĕвă йулташ та пĕлÿ тĕлĕшпе нумай ÿснĕ.

ССРС, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра профсойуз организацийĕ нихăçанхинчен активлă тата пысăк хавăртлăхпа ĕçлерĕ. Суйлав материалĕсене срукчен вырăнсене çитернĕ. Ку ĕçре уйрăмăнах Быкăвă, Коньков йулташсем тăрăшса ĕçлерĕç. Григорйĕв йулташ суйлав вăхатĕнче радио ĕçне лайăх йĕркеленĕшĕн преми илме тивĕçе тухрĕ.

Член укçисем пухасси те лайăх пырат. Пер уйăхран ытла член укçи тÿлеменнисем пачах çук. Кашни член хăйĕн тивĕçне—член укçи парассине вăхăтра пурнăçлама тăрăшат.

Хальхи вăхăтра профсойуз членĕсем ăмăрту договăрĕсене тĕрĕслеççĕ, çавăнпа пĕрлех Трак районĕнчи çыхăну кантурĕпе тунă договăра тĕрĕслеме хатĕрленетпĕр.

В. Иефремăв.

Лагĕрте 146 ача пулнă

Кăнашри вакунсем йусакан савăтри профсойуз комитечĕ кăçал рабочисемпе инженерлă-техниклă работниксен ачисене валли Кĕçĕн Çавал шывĕ хĕрринче пионер лагĕрĕ уçнă. Икĕ уйăх хушшинче лагĕрте 146 ача пулнă. Лагĕрте мĕнле вăхăта иртерни çинчен пионер отрйачĕн вожатăйĕ Шура Чернайĕв çапла каласа парат:

— Пионерсен лагĕрĕ —ачасен савăнăçлă канăвĕ. Кĕске вăхăтрах епĕр дисциплинăна пăхăнма вĕренетпĕр. Лагĕрте пулни пире хамăран пурнăçа пысăк тасалăхпа, тирпейлĕхпе йĕркелеме вĕренет.

Лагĕрте ачасем хăйсен вăхăтне савăнăçлăн та культурăлăн иртернĕ. Унта физкультурă вăййисем тата ытти тĕрлĕ массăлă вăйăсем пулнă. Çав вăхăтрах хаçат-журналсем вулассине, политикă вĕренĕвне те манса хăварман. Лагĕрте 4 номĕр çтена хаçачĕ тухнă.

Çентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пионерсен лагĕрĕ хупăнчĕ. Ачасем лайăххăн та савăнăçлăн канса, хаваслăн вĕренме тытăнчĕç.

В. Ласточкин.

Шкулсенче

Районсенчен пĕлтернĕ тăрăх

Елĕк районĕнчи Ассакассинчи туллимар вăтам шкул, Куракkасси, Пичкасси, Пизенер тата Ильйанкăри пуçламĕш шкулсем çĕнĕ вĕренÿ çулне лайăх хатĕрленнипе кĕтсе илчĕç. Ку шкулсенче малтанхи кунсенчен пуçласа ачасем 100 процентпех шкула çÿреме пуçларĕç.

Вĕренÿ çулне йапăх хатĕрленнĕ шкулсем —Шатлавăри пуçламĕш шкул пуçлăхĕ Шумилăвă никамран ыйтмасăрах шкултан тухса кайнă та, халĕ те килмен-ха. Ăçта кайнине никак та пĕлмест. Кунта пĕрремĕш кун 72 ачаран 58 ача çеç шкула пынă.

Ошков.

Шăнкăртам районĕнчи шкулсене малтанхи кун мĕн пурĕ 3184 ача пычĕç. Ку вĕренме пыма тивĕçлĕ ачасен хисепĕн 80,3 проценчĕ пулат.

Кужакăв.

Совет профсойузĕсен хисеплĕ обйазаннăçĕсем

Пайан Пĕтĕм Сойузри Профсойузсен Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ хăйĕн ĕçне тытăнат. Кун йĕркинче — професçилĕ сойузсен ĕçĕсен пысăк ыйтăвĕсем—ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ кăтартса пани тăрăх пăхса тухса йышăннă Пĕтĕм Сойузри Профсойузсен Тĕп Совечĕн VI-мĕш пленумĕн решенине пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесси, професçилĕ сойузсен уставне сÿтсе-йавса йышăвасси тата социальнăй страховани совечĕсен ĕçĕсем çинчен тăракан ыйту. VI-мĕш пленум пулнăранпа иртнĕ çулталăк ытла вăхăтра Ленин—Сталин партийĕ йертсе пыракан профсойузсем хисеплĕх тĕлĕшĕнчен ÿсрĕç, хăйсен ĕçĕсене лайăхлатрĕç. Çав вăхăтра профсойузсен йышĕ мĕлйун çын ÿснĕ. Профсойуз членĕсен 23 мĕлйуна çарĕ Пĕтĕм Сойузри Профсойузсен Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕнчен советлă професçилĕ сойузсен йухăмне малашне аталантарса пымалли программăна кĕтет.

Партин Сталинла Тĕп Комитечĕн çекретарĕсем Л. М. Каганович тата А. А. Андрейĕв йулташсем тÿрех хутшăнса ĕçленĕ Пĕтĕм Сойузри Профсойузсен Тĕп Совечĕн иртнĕ пленумĕ, профсойузсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене большевикла туйса палăртрĕ, профсойузсен йертсе пыракан органĕсем профсойузсен массинчен уйăрăлса кайнине тата вĕсем социалисăм строительствин вилă ĕçĕсенчен йулса пынине кăтартрĕ. Парти профсойузсен йухăмĕнчи контрреволюцилĕ тред-йунионисăма çапса аркатрĕ, Томскин тăшманла бандине çĕмĕрсе тăкрĕ. Анчах профсойуз работникĕсем профсойузсен кулленхи практикăлă ĕçĕнче тред-йунионисăм йулашкисене вĕçне çитиччен тăрă шыв çине кăларса пĕтермен. „Тред-йунионисăмăн çав йулашкисем нумайĕшĕн, тата профсойузсен çĕнĕ работникĕсен ĕçĕнче те политикăлă пассивлăхра, хуçалăх тата профсойуз органĕсен ĕçĕнче рабочисемпе служăщисен культурăпа-йăла ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртессине бÿрократла пăснисем çине тимсĕр пăхнинче, государствă органĕсем валли кадрсем парас ĕçрен пăрăннинче, коммунисăм шкулĕ пулса тăракан профсойузсен задачине хакламаннинче палăрнă" тесе каланă Пĕтĕм Сойузри Профсойузсен Тĕп Совечĕн VI-мĕш пленумĕн революцийĕнче. Пĕтĕм Сойузри Профсойузсен Тĕп Совечĕн VI-мĕш пленумĕ пулса иртнĕ хыççăнхи вăхăтра, пирĕн профсойузсем, паллах, тред-йунионисăм йулашкисене пĕтерес, профсойуз аппаратĕнчи троцкисла-бухаринла бандăсен йулашкисене пĕтерес, профсойуз демократине сарас, йертсе пырас ĕçе çĕнĕ кадрсене лартас тĕлĕшпе нумай ĕç-леççĕ.

Профсойузсен органĕсен йулашки суйлавĕсене вилă демократи тăрăх туса иртернĕ. Профсойузсен çĕнĕ органĕсене суйланă, вĕсенче ĕçлеме тÿрĕ ĕçлекен работниксене, партири тата партире тăман большевиксене лартнă. Профсойуз аппаратне чылай йенĕпе лайăхлатнă, малта пыракан рабочисемпе работницăсене, инженерсене, техниксене тата служăщисене çĕршер пин çынна активлă ĕçе хутшăнтарнă. 164 професçилĕ сойузсен сведенийĕсем тăрăх, страховой советсен членĕсенче, страховой делегатсенче, общĕствăлă инспектăрсенче 850 пин çын ĕçлени çинчен калани те çителĕклĕ. Кунта культурла комиççисен, оборонă, физкультурă тата ытти ĕçсене организацилекен активиссене вуншар пин çын хушмала. Халĕ ĕнтĕ ĕç çĕнĕ актива ĕçе лартнинче çеç мар. Çĕнĕ актива ĕçе лартасси куллен пулса пымала ĕнтĕ. Халĕ тĕп ыйту вырăнта тăракан—вăл—кадрсене воспитани парасси, профсойузсен кадрĕсене ленинла-сталинла вĕрентсе çитĕнтересси пулат. Çапла пулин те, кадрсене воспитани парасси професçилĕ сойузсен тата Пĕтĕм Сойузри Профсойузсен Тĕп Совечĕн хăйĕн ĕçĕнче те чи начар вырăнсенчен пĕри пулса тăрат. Çакна „Правда" хаçатра вичĕм кун пичетлесе кăларнă профработниксен ушкăнĕн çырăвĕ те лайăх кăтартса парат.

Мĕлйуншар çын шутланакан актив ÿсмеле, вĕресе тăракан ĕçре вĕренмеле, çирĕпленмеле. Хăшпĕр йулташсем профсойуз ĕçĕ кăмăла каймаст тата кăштах „кичем" тесе калаççĕ, анчах професçилĕ ĕçе чĕрĕ, интереслĕ, большевикла çинечлĕхпе тулли тата ĕçе пуçаракан тăвасси хăйсенчен килет. Нумайăх та пулмаст, Большевскри машинăсем тăвакан савăтри профсойуз членĕсен пухăвĕнче завком председателĕ Мостаков йулташ хăйĕн отчотĕнче завком пленумĕ 15 хут пухăннă, вăл 53 ыйту сÿтсе-йавнă, тесе тăрăшсах палăртнă. Чăнах та çак отчот кăмăла кайман, вăл кичем пулнă, мĕншĕн тесен завком хăй тумали чи чĕрĕ, чи кирлĕ ĕçсем çинчен нимĕн те каламан. Профсойуз членĕсем Дельновпа Краснов йулташсем пренире çакăн çинчен завкома каласа панă. Вĕсем каланă: завком ĕçе сыхласси çинчен, техникăлă хăрушăсăрлăх çинчен тăрăшман, савăтри рабочисем валли ĕнтĕ çиччĕ çул хушши пысăк çурт тăваççĕ, профсойуз организацийĕ çак çурта хăвăрт туса пĕтерес йенĕпе хăй йенчен нимĕн те тумаст. Общежитире вÿрĕ, таса мар; рабочисем хăйсем хушшинче социалисăмлă ăмăрту договăрĕсем тăваççĕ, анчах вĕсене никам та тĕрĕслемест, çав договăрсем хут татăкĕсем çеç пулса тăраççĕ. Сойуз членĕсем профсойуз ĕçĕнчи формалисăм çинчен каланă, профсойуз рабочисен йăли çине çаврăнса пăхманни, вĕсен ĕçĕнче большевикла кăвар тата пуçарулăх çукки çинчен каланă.

Çав пухура, профсойуз членĕсен ытти нумай пухăвĕсенчи пекех, рабочисемпе служăщисем завкома вăл ĕçукçи ыйтăвĕ çине çаврăнса пăхманшăн критикленĕ. Ĕçукçине организацилес ĕçре сăтăрла ĕç—вак буржуалă уравниловкă халĕ те пур-ха. Халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерни ĕç тухăçлăхне хăпартат, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатат.

Рабочисен тата унăн çемйин пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшни, рабочин политикăлă, культурлă тата техникăлă ÿсĕмĕшĕн тăрăшни, унăн апат-çимĕçне, канăçне лайăхлатассишĕн, савăнăçĕшĕн тăрăшни—çынна питĕ хакланакан пархатарлă, чи пархатарлă ĕç! Çакна кашни профсойуз работникĕн туйса илмеле, ăнланмала, хăйĕн пĕтĕм ĕçне çыншăн сталинла тăрăшас йенĕпе туса пымала. Кашни профработникăн унăн ĕçĕ политикăлă ĕç, канцелярилĕ ĕç маррине, воспитани ĕçĕ, административлă ĕç пулманнине ăнланмала. Профсойузăн кашни ĕçне большевикла идейлăхпа тусан çеç, профсойузсем хăйсен тĕп задачине—коммунисăм шкулĕ пулассине, рабочисемпе служăщисен пĕтĕм массине коммунисăм шухăшĕпе вĕрентес задачăна пурнăçа кĕртме пултараççĕ.

Уйрăм профорганизацисен ĕçĕнче сÿрĕклĕх пурри, чĕрĕ ĕç çукки—вăл найавланнин, политикăран айакра тăнин результачĕ. Малтанлăха пăхсан „пĕчĕк фактсем", нумай клубсене харпăрхăй пултарулăхне кăтартмалли, рабочисен творчествине кăтармалли вырăнтан, коммерчески вырăн туса хуни, хăшпĕр профсойузсем пĕтĕм культурлă-массăлă ĕçе ташă кружокĕсем организацилессипе иртерсе йанине çакăнпа çеç ăнлантарма пулат.

Профсойуз ĕçĕ çĕршер тата пиншер конкретлă ĕçсенчен пулса тăрат. Акă çаксене, кулленхи ĕçсене идейлă тумалла, вĕсене кашни рабочийе политикăлă воспитани парас йенĕпе туса пымала. Профсойузăн кашни пусăм хамăрăн таван çĕршывăн хăватне малалла ÿстерме пулăшмала.


Тĕслĕхе, профсойузсен ĕçĕнчи çак отраслине, ĕçе сыхлассине илĕпĕр. Ĕçе сыхлас тата социальнăй страховани йенĕпе профсойузсене государствă ĕçне шанса панă. Çапла пулин те кунта питĕ пысăк çитменлĕхсем пур. Ку таранах çитсе те ПСК(б)П Тĕпкомĕн февраль-мартри пленумĕ техникăла хăрушăсăрлăх правилине тепĕр хут пăхса тухасси çинчен йышăннă решенийе пурнăça кĕртмен. Çак правилăсенчен нумайĕшне сăтăрçăсем туни паллă пулин те, ку таранччен те пăхса тухса тÿрлетмен.

Нумай фактсем профсойузсем ĕçе сыхлассине хакламаннине кăтартаççĕ. Сойузсен вуншар Тĕп Комитечĕсен санитари инспектăрĕсем те çук. Техникăлă хăрушăсăрлăх пропаганди çине нимĕн чухлĕ те тимлĕх хумаççĕ. Нумай предприйатисенче ĕçе сыхлама государствă паракан пысăк укçатенкĕпе усă курмаççĕ. Нумай предприйатисенче çĕнĕрен килнĕ рабочисене инструктаж парасси çителĕксĕр. Çавăнла та, Йарославльти синтетически каучук савăтĕнче кăçал сарăмсăр пулнă инкексенчен 58 проценчĕ савăтра çулталăкран кайа ĕçленĕ рабочисене тивет. Профсойуз работникĕсен çакна ăнланмала: пирĕн государствăра ĕçе сыхласси çине тимлĕх хуманни пулма пултараймаст, ĕçе сыхласси питĕ пысăк ĕç, политикăлă ĕç, мĕншĕн тесен вăл ĕççыннисен сывлăхне тивет. Ленин—Сталин партийĕн пĕтĕм ĕçĕ ĕççыннишĕн тăрăшнинче, ĕççыннисемшĕн тăрăшасси— профсойузсен хисеплĕ тивĕçĕ.

Пĕтĕм Сойузри Профсойузсен Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ иртнĕ пленумăн решенисене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслет. Çак факт хăйех питĕ пысăк вырăнта тăрат. Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн пленумĕн ĕçĕнче хутшăнса ĕçлекенсене çак тĕрĕслеве вăйлăн иртерме, профсойузсен пур çитменлĕхĕсене те вĕçне çитиччен хăйуллăн палăртма, профсойузсене хамăрăн социалисăмлă государствăна малашне тĕреклетессишĕн кĕрешес ĕçре тата пултарулăрах, вăйлăрах тума сĕнмеле.

„Правда" умстатйи".

УКРАИНĂ ПОЕЗИЙĔ



Шевченкон Харькăври памйатникĕ

Тарас Шевченко

ХУШСА ХĂВАРНИ

Еп вилсе виртсассăн, есĕр
Ман çинчен ан манăр.
Савнă Украинă хирĕн
Варрине пытарăр:
Курăнайтăр Днепр çырĕ,
Тырă-пулă хирĕ;
Илтĕнтĕр хăватлă Днепр
Шавлани кас-ирĕн.

Тинĕсе йухса кайсассăн
Тăшмансенĕн йунĕ
Украинăран... Еп кайăп,
Хир те, çыр та йулĕ.

Пĕтĕмпех ун чух хăварăп,
Турă патнех кайăп
Кĕлтумашкăн... Халĕ унсăр
Турăна йышнаймăп.

Мана пытарсан—пăлханăр,
Сăнчăра аркатăр.
Тăшмансен йунне йухтарăр,
Ирĕклĕх çуралтăр.
Ирĕк пурнăç тусассăн,
Çĕнĕле пурнатăр.
Есĕр асăнма ан манăр
Ун чухне мана та.

★

Павло Усенко

ПОЛКРИ ТИМĔРÇ ÇИНЧЕН

Пирĕн полк çил пек вĕçтерчĕ
Похода, инçетрине.
Хура тур утсем хăйулăн
Ыткăнаç шур çар çине.

Пурте хĕрлĕ казак—епĕр
Çвреп тытнă чĕлпĕре.
Чăрмава сирсе вĕçетпĕр...
Умра кас. Ӳкет тĕтре.

Пире хирĕç, шыв йуххи пек,
Çутатать тăшман хĕçне.
Тухнă Шполăран,—пĕлетпĕр,—
Пире хирĕç касхине.

Пирĕн полкăн кашни учĕ
Хатĕр çисĕм пек вĕçме.—
Паттăр йĕкĕт йатне пачĕç
Пирĕн полкăн тимĕрçне.

Йухрĕ йурă: есĕ, тимĕрç,
Таканла маттур ута.
Сана пулĕ пысăк тивĕç,
Хĕр илме пыр ман пата.

Хура кусăă та илемлĕ,
Йаштак—Кийĕв хăви пек;
Сăнĕ-пичĕ пит типтерлĕ,
Пит те çепĕç пĕвĕпе.

Вăл—Марусçă, сарă—çӳçĕ,
Чи чапли Могиљовра.
Вĕркĕче вĕртер те уççăн,
Таканла урхамаха.

Лашасен кашни таканĕ
Хĕлхем саптăр походра.
Тăшман çарĕ йалт путланĕ,
Йур пек вартĕ вăл уйра.

М. Йастран куçарнă.

Павло Тычина

Парти йертсе пырать

Урчăрах, мĕнле пĕлессĕ.
Пурĕ-пĕр вĕсем пĕтессĕ,—
Епĕр тăрăшар:
Пысăк шăтăк хатĕрлетпĕр
Буржуйсем валљи, пурне те
Çĕмĕрсе тăкар!
Аркатса тăкар!

Пур çĕрте те халĕ паллă:
Пирĕн паттăрлăхнă халăх
Тăшмана тылла ť,
Хăвăрт малала куçатпăр,
Пусмăртисене паратпăр
Хамăран алла,
Ĕçлĕхлĕ алла!

Савăт-ем тăватпăр епĕр,
Шывсене те чун кĕртетпĕр
Анăçла ĕçпе.
Канавсемшĕн, пур уйхиршĕн
Пилĕкçуллăхсенĕн чысĕ
Савнă амĕш пек,
Ырă амĕш пек.

Хĕрлĕ Çар—çĕршыв хăвачĕ
Çĕр çинче, пур сывлăш флочĕ
Анлă тӳпере.
Турттарать, акать, перет те,
Вăл çĕклет республике те
Тата çӳлерех!
Тата çӳлерех!

Пĕрре мар вăйне кăтартрĕ
Паттăр комсомолăн çарĕ,
Тепĕр вăй ӳсет:
Вăл—бољшевикла кунсенĕн
Пионерĕсем. Пурне те
Парти вĕрентет,
Вăл пырать йертсе.

Епĕр пĕр майах çĕнтернĕ,
Йаланах вĕт тĕлĕнтернĕ
Паттăрлăхпала.
Камăн пулчĕ сивĕ пољус,—
Стратосферă та ун пулĕ,—
Вăхăчĕ çапла,
Пирĕн пулмала.

Пур йенчен те пултарулă,
Пирĕнтен вăйли çук урăх
Пĕтĕм тĕнчипе.
Пирĕн ӳсĕм хыççăн ӳсĕм,
Çирĕп халăхсен союзĕ
Туслăх паллипе,
Туслă пулнипе.

Урчăрах, мĕнле пĕлессĕ,
Пурĕ-пĕр вĕсем пĕтессĕ,
Епĕр тăрăшар:
Пысăк шăтăк хатĕрлетпĕр
Буржуйсем валљи, пурне те
Çĕмĕрсе тăкар!
Аркатса тăкар!

★

В. Соçурă

Сталин

Йату сан çывăх, йурă пек, пире;
Кирек ăçта та пирĕнпе пĕрле ес.
Сана, йалан йалав пек вĕлкĕшме,
Мĕлйун алсем тӳпе патнех çĕклерĕç.

Ес йаланах пире пыран йертсе,
Çĕнтерӳсем патне илсе пыратăн.
Мĕлйун чĕресене пĕрлештерсен—
Пулать вăл сан чĕрӳ, хисеплĕ
Сталин.

Иалпа хула шавлаççĕ. Хăпарать
Кăвак инçелĕхрен телей хĕвелĕ.
Çĕршыв сана хĕрӳлĕн йуратать,
Еççыннисем кашни санпа телейлĕ.

Чечекленет çĕршыв хавас вăрманĕнче,
Çапăçура йурланă йурă йевĕр.
Санран ку килчĕ, санăн партинчен,
Сире пула анчах çĕнтерне епĕр.

Çук, çухалмарĕ йун тăкни ахаљ,
Çухалчĕ выçлăх, иртсе карĕ
хурлăх.
Савăтсемпе хирсем хаваслă халљ,
Шăрантараççĕ йурă хыççăн йурă.

Илсем, телейлĕ халăх йуррине,
Вăл сан çинчен йурлать йанравлăн,
уççăн:
Малашлăха йертсе пыратăн ес.
Ес—мĕлйунсен мухтавĕ, ес—çулпуçĕ.

★

Максим Рыљский

Сонет

Ман шухăш майлă вĕççĕр шыв
йухать,
Кĕперĕсем—хавхалану пек лайăх.
Çӳлте вĕçсе çӳреççĕ тĕрлĕ кайăк,
Шывра мотор аслати пек шавлать.

Кунта кĕçеннĕ вăрçă учĕсем,
Вĕçтернĕ вăрçă сывлăша вут-çулăм.
Аркатрĕ ун аллисене хăйулăн
Совет аллийĕ, çирĕп вăй илсе.

Тăшман айлатрĕ те час лăпсăртатрĕ
Йӳтенĕ кашкăр йевĕр, кайала.
Тĕрмесене йалт мăлатук аркатрĕ.

Çав кĕллĕ вырăнта пайан хула
Халљчен пулман керменсемпе
йышланчĕ,
Вăл Днепр çийĕн çамрăккăн
çуталчĕ.

Павло Тычина, Рыљский, Леççă Украинкă, Шевченко, Соçурă сăввисене В. Усли куçарнă.



Леççă Украинкă

Леççă Украинкă

МАНĂН ÇУЛ

Çуркуннепе ирех çула еп тухрăм,
Хам утнă майăн йурă кĕвĕлеттĕп.
Кам çул çинче манпа тĕлпулĕ,
туххăм
Ун йачĕпе çапла йурлатăп епĕ:
„Пĕччен кайсан—çухалăп епĕ
çулран,
Пĕрле тӳр çул тупмашкăн
çăмăлрах".
Еп йурăпа тек малала пыратăп...
Ман йурăра пророклăх çук, ан
шырăр.
Ман сассăм уçă мар, çапах еп
ырă —
Кам хурланса йĕрет, ăнакалатăп:
„Хисеплĕ тусăм, макăрар пĕрле".
Еп йуррăма çăвап куççӳлпеле.
Çак пусмăрти çулсем тискер те
тĕксĕм..
Еп çул çинче хаваслăн та хăйулăн
Телей те ирĕк йуррине илтсессĕн,
Ман чĕрере те пулĕ урăх йурă.
Пытарăп хамăн нишлĕ сассăма,
Ирĕк йурри пусланĕ шăранма.
Еп тĕксĕм пĕлĕте пăхап пулсассăн,
Çĕн çăлтăрсем пĕре те шырамастăп.
Кунçул тĕтрийĕ витĕр еп тупасшăн:
Тăванлăх, танлăх, ирĕклĕ хаваслăх —
Тăван çĕршывăн висĕ çăлтăрне,
Халљ инçетрен çеç çиçекенсене.
Еп çул çинче хăть хурлăх çеç
тупам.
Хăть çепĕç чечек çеç курнайтăр
ăшшăн,
Хăть савăк тĕллеве çитсе курам,
Хăть тивтĕр вăхăтсăр вилсе выртмашкăн,—
Мĕнле пулсан та, пурнăçăн çулне
Çĕн йурă йурласа вĕçлесшĕн еп.

★

Леонид Первомайский

ХАВАСЛĂ ÇАМРĂКЛĂХ

Хаваслă çамрăклăхăм манăн,
Салам сана, салам!
Хаваслă çамрăклăхăм манăн,
Чăрмавлăх çук сана!
Уйăв пек çамрăклăхăм манăн,
Йанрат пур таврана!
Куратăп еп: çулсем васкаç,
Илтетĕп—ес утан,
Ес иртрĕн те—каллех хавас
Сăнпа ума тухан.

Уйăв пек çамрăклăхăм манăн,
Санпа утап мала.
Çĕкле ес, çамрăклăхăм манăн,
Сăвва та кăмăла!
Уйăв пек çамрăклăхăм манăн,
Йалан еп санпала!
Сана хавас та харсăршăн
Тек тав тăватăп еп.—
Саватăп еп сава ăшшăн,
Сана—мухтав, хисеп!

Леççă Украинкă

Çирĕм пилĕк çул кайала, Грузире Украинăн Леççă Украинка йатлă литературăлă хушаматпа паллă пулса тăракан талантлă поетесси Лариса Петровнă Косач-Квиткă вилнĕ. Унăн йачĕ, Тарас Шевченкон, Иван Франков, Михаил Коцубинскийĕн йачĕсем пекех, Украинăн револјуцичченхи литературинче çутă йат пулса тăрать.

Совет литературине хĕсĕнсе кĕнĕ троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла вăрă-хурахсем Леççă Украинкăн Украинă халăхне çывăх тăракан йатне националисла пылчăкпа варласа тăкма тăрăшнă. Вĕсем, икĕпитленсе Украинă литературин пуйанлăхĕнчен кăларса пăрахса, паха поетессăн творчествине фашисăм пусмăрне парса туллаттарасшăн пулнă. Еç тухмарĕ! Совет халăхĕ, тăшманăн усал шухăшĕсене пур çĕрте те тăра шыв çине кăларса пынă май, литературă фронтĕнче те тăшмансен ирсĕр мелĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ.

Леççă Украинкă çырса хăварнă произведенисем бойецăн, кĕрешӳ халăх çĕнтерипе вĕçленессине пĕтĕм чунтан-вартан ĕненекен çыннăн хĕрӳлĕ, тĕллевлĕ шухăшĕпе тулнă. Буржуалă обшчĕствăн вак политикантчĕсемпе хăраççă „проветителĕсем" хушшинче Леççă Украинкă пĕччен çын пулнă, пĕр пĕччен кĕрешнĕ.

Егем пурнăç услови йĕсем умĕнче пуç тайса тăрассине тарăхулăн хирĕçлекен поетессă хăйĕн творчĕствин йуратнă сăнлăхĕ вырăнне пăлханакан Прометейăн сăнлăхне суйласа илсе, ăна вăл пур çĕрте те пуçне усакан суйа Христоспа таплаштарса кăтартать.

Леççă Украинкă пек, Христоса хирĕçле темăпа хĕрӳлĕн, пысăк туйăмпа çырнă поетсен йачĕсене тĕвче литературинче сахал палăртма пулать. „Катакомбăра" йатлă драмăлă поемă христианствă тĕнĕн леш тĕнчери телей çинчен тата ку тĕнчере пур йенчен те пăхăнса пурăнмали çинчен вĕрентнин суйалăхне уççăн палăртса, христианствă вĕрентĕвĕн чăн-чăн йанлавне туйса илнĕ неофит-тарçăн етемле сăнлăхне тарăнăн кăтарса парать.

Еп хамăн йуна пĕр тумлам та
Памастăп Христосăн йунĕшĕн,
Еп мухтатăп паттăр Прометейа,—

тет çав тарçă, христианствă тĕнĕн суйалăхне, мĕскĕнлĕхне питлесе. Тарçă хăй тарçăра пурăннине ăнланса илсе, харам пырсемшĕн ĕçлеме пăрахать. Çавăн çинчен шухăшланă, çавăн çинчен çырнă, çавăн пек хăйулă ĕçсем тума çĕкленĕ Леççă Украинкă.

Леççă Украинкă кĕрешӳре хăйулă тата вĕçне çитичченех паттăр пулма, пусмăрлăхпа йĕркесĕрлĕх обшчĕствин тĕрмине çĕмĕрсе тăкакан бойец пулма чĕнет.

Кĕрешĕве çĕклевни, кунçул йăвăрлăхĕ умĕнче пуç усманни, пуласлăх çĕнтерĕве ĕненни Леççă Украинкăна хавхалантарнă, вăл реакци çулĕсен хăйарлăхĕ умĕнче те лăпланса тăман, вăл унчухне пĕтĕм чунхавалĕпе çапла çырнă: —

Хĕсрăшала хыт чăмăртать ман алă,
Ман чĕрере йанăрать кĕрешӳ
сасси.

Поетессă бойеца хавхалантарса тăракан паттăрлăхпа хăйулăхăн çăлкуçĕ мĕскер пулнине пĕлнĕ.

Пултарулă çынăн вилĕмсĕрлĕхĕпе чăн-чăн аслăлăхĕн уççи халăхра, унăн ĕçхалăхĕшĕн усăлă пулнинче. Çĕнтерĕве халăхпа пĕрле çеç, вăл халăхшăн пулсан çеç, тума пулать. Леççă Украинкă хăйĕн „Роберт Брюс" поемиинче Шотландин çурма-легендарлă рыцарĕн-борецĕн çĕнтерĕвĕ вăл хăйĕн паттăрлă ĕçĕсене тунă чухне Шотланди халăхĕпе тачă çыхăнса тăнипе çеç пулнине кăтартса парать. Çакăнта—бойец пултарулăхĕн вăрттăнлăхĕ, çакăнта—унăн йалавĕн тӳрĕлĕхĕ.

Пĕтĕм етемлĕхе ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çынăн тӳрĕлĕх йалавне Леççă Украинкă хăйĕн творчĕствиниче çĕклесе малалла илсе пынă, вăл—халăхăн чăн-чăн хĕрĕ тата Тарас Шевченкон тарăхупа тулнă сăмахне малала илсе пыраканĕ пулнă. Вăл хăйĕн пултарулă ăс-хакăлне ӳстерсе, çĕклентерсе пырса,—вырăс, Украинă тата пĕтĕм тĕвче литературин чи лайăх традицийĕсене йышăнса илнĕ.

Шевченон револјуцилĕ сăмахне малала илсе пынисĕр пуçне, вăл Пушкин поезийĕне те хавхаланнă. Вăл инçетри Хони йатла вырăнта пурăннă вăхăтра ыйтса йанă кĕнеке вăл—Пушкинăн „Каменный гость" йатлă драмăлă кĕнеки пулнă. Хăйĕн „Каменный хозяин" произведенине çырма палăртнă май, Дон Жуан çинчен çырнă нумай литературăран вăл, вĕсене пурне те питĕ лайăх пĕлсе тăнăскер (Йевропăри халăхсен чĕлхисене пурне те пекех пĕлнĕ), хăйĕн хавхаланăвĕн çăлкуçĕ вырăнне Пушкинăн пысăк ăсталăхпа çырнă „Каменный гость" драмине суйласа илнĕ. Вăл произведенин йачĕпе те („Каменный хозяин") хăй çыракан произведени Пушкинăн произведенийĕпе çыхăннине палăртса хăварать, анчах Дон-Жуана, йурату тыткăнçине, хăйĕн Дон-Жуанĕ, лăпланăвăн тыткăнçи туса хăйне майлă сăнласа кăтартать.

Леççă Украинкăн пултарулăхĕн аталанăвĕнче, Шевченкопа Гейнĕн поезийĕ пекех, Пушкинпа Некрасăвăн поезийĕ те пысăк вырăн йышăннă, вĕсем унăн пултарулăхне интернационаллă йенне ӳсме май панă. Украинăн паллă поетесси аслă вырăс халăхĕн пысăк кулјтурипе йаланах тачă çыхăнса тăнă.

Ку çыхăнăва Леççă Украинкă çинчен çырнă националиссем те йышăнмасăр тăма путарăйман Пирĕншĕн çав çыхăну калама çук пысăк пахалăхлă пулса тăрать. Поетессăн „Надпись на руине" сăввин шухăшĕ халăх материаллă хаклăхсене тăвакан вăй пулни тата ăс-тăн йапалисене çуратса кăларакан пĕртен-пĕр иксĕлми çăлкуç пулса тăни çинчен аслă Горький каланă генилĕ шухăшпа çыхăнса тăмасть-и-ха? Ку ăнсăртран пулнă çыхăну мар, вăл—пултарулăх çыннисемпе халăх хушшинчи çыхăнăва тĕрĕс ăнлантарса паракан шухăш, аслă вырăс кулјтурин чи лайăх традицийĕсем—Пушкинпа Некрасăвăн традицийĕсем çирĕплетсе хăварнă, пирĕн кунсенче Горький малала илсе пынă шухăш.

Владимир Ильич Ленинăн статйисем, Чехăпа Горький çырнă произведенисем пичетленнĕ тата „Тăвăл хыпарçи" пичетленнĕ „Жизнь" йатлă журнала çырса тăраси те Леççă Украинкăн ăнсăртран пулман. Леççă Украинкă вырăс вулакавĕсене Украинă литературинче пулса пыракан çĕнĕ ĕçсем çинчен çырса пĕлтерсе тăнă. Çапла майпа вырăс кулјтурипе Украинă кулјтури хушшинчи çыхăнăва тарăнлатма, çирĕплетме пулăшнă.

Леççă Украинкă хăйĕн сăввисенче, драмисенче тата литературăлă-критикăлă статйисенче йаланах пурнăçа тĕрĕс кăтартса паракан искусствă тăвассишĕн кĕрешнĕ, ун чухнехи буржуалă обшчĕствăн ӳкĕнчĕклĕ, пĕтсе пыракан кулјтурин суйалăхне чĕререн питленĕ.

Пусмăрти чухăнсен вăйлă йышĕ
Çапăçнă чух ман хĕçе те йышăнĕ.
Есĕ, ман хĕç, чирлĕ алăсене
Пулăшниччен ытла пулăш
сыввисене.

11—12 çула çитсенех шăмă-туберкуљозĕ Леççăна утайми тунă. Çавăн хыççăн вăра вăл тăван çĕршывĕнчен, тăван килйышĕнчен инçетри вырăнта, унăн сывлăхĕшĕн усăлă çанталăклă вырăнта пурăнма пуçлать. Пурнăç патне, кĕрешĕве, ĕç патне чăтăмсăр туртăнаканскер, вăл нумай çулсем хушши сывлăхĕ йусанассине чăтăмлăн кĕтсе пурăнать, анчах сывлăхĕ йусанаймасть. Çак чирлĕ, йалт ывăнса çитнĕ, вăйсăр вăй-халлă хĕрарăмăн револјуцилĕ чун-халĕ хăйĕн вăрăмне тата йышăнăвне етемĕн мĕнпур хурлăхĕсене те çĕнтерессине шанчăклăн ĕненнипе хавхаланнă творчĕствăра тупнă.

Пирĕн тапхăр çакăн пек пурнăçăн аслăлăхне ăнланса, ăна тивĕç-

(Йуççини 4-мĕш страницăра).

КИТАЙРИ ВАРÇА

Центрти Китайра, Йанцзы йуханшывĕн кăнтăр сыранĕнче Китай çарĕсем августăн 31-мĕшĕнче Жуйчан районĕнче йапонĕцсене хытăлăн аркатнă. Çапăçу пĕр кун кунĕпех пынă. Йапонĕцсем каллех кунĕпех пынă. Йапонĕцсем каллех халтарса вĕлерекен газсем янă. Анчах Китай çарĕсем тимĕçе хутчен те хирĕç-хирĕç тăрса анăçлăн вăрçнă, Йапони çарĕсем Жуйчан хули патнелле кайаала чакнă.

Çав кунах Китай çарĕсем Жуйчанран кăнтăр-хĕвелтухăç йенне йапонĕцсене икĕ высотаран хĕссе кăларнă. Çакăнта вăрçнă чухне йапонĕцсен 400 çын вилнĕ.

Китай артиллерийĕ, тĕл тивретнине палăртаççĕ. Августăн 30-мĕшĕпе 31-мĕшĕнче Йанцзы шывĕнче Йапонин вунă çар карапне хытăлăнах сийенленĕ. Çапăçура амаийнă йапонĕцсене кашни кунах пĕр пинпин пуçласа виçĕ пин çын таран Шанхайа илсе пыраççĕ.

Цзуцзйанрен кăнтăрала та çапăçусем пыраççĕ. Китай çарĕсем йапонĕцсен пур атакисене те сирсе йараççĕ, йапонĕцсен пысăк сухатусем пулаççĕ.

Çурçĕр Китайра Шаньси провинцин кăнтăр пайĕнче йапонĕцсем Хуанхе шывĕ урлă каçма хăтланнă. Анчах вĕсен ĕçĕ пĕртте анăçлă пулаймаст.

Хенань провинцин çурçĕр пайĕнче августăн 31-мĕшĕнче Китай çарĕсем пит хайарăн вăрçнă хыççăн йапонĕцсене Цзийуаньрен (Хуанхе шывĕн çурçĕр сыранĕнче, Лойанран çурçĕрелле) хĕссе кăларнă.

Кăнтăр Китайра августăн 31-мĕшĕнче Йапони çарĕсен отрйачĕ тăвата катĕрпа Ханьцзйан шывĕ тăрăх тăвала Йопин районĕ патне ситнĕччен (Сватоуран çурçĕрелле) ишсе хăпарнă та унта вĕсем вниа шутланă. Китай çарĕсем йапонĕцсене пулеметран пенипе кĕтсе илнĕ, лешсен вара кайала чакма тивнĕ. Кайала чакнă чухне пысăк çухатусем пулнă.

(ТАСС).

Гаундун провинцинче çар ĕçне массăллăн вĕрентеççĕ

Китайăн Гуандун провинцинче халăха çар ĕçне вĕрентесси массăллăн сарăлса пырать. Темиçе уйăх кайала самооборона отрйачĕсем организацилеме тунă комитет провинции мĕн пур пысăк хуласенче çар ĕçне вĕрентмелли ĕçсене туса иртерет. 300 пин добровольца çар ĕçне вĕрентеççĕ. План тăрăх, çулталăк пĕтнĕ çĕре çар ĕçне 800 пин çынна вĕрентмеле. Çар влаçĕсем çавăн пекех кирек хăш вăхăтра та мобилизацилеме май пулакан пĕр мĕлйун çынран резерв тума тăрăшаççĕ.

(ТАСС).

Йапонĕцсен тылĕнчи партизансен йухăмĕ

Çурçĕр Китайра Йапони тылĕнчи партизансен йухăмĕ вăйланса пыни Йапони командованине пысăк йăвăрлăхсем кӳрет. Партизансем Йапонин тылри пысăк вăйĕсене çавăрса илсе вĕсене тăтăшах сийенсем тăваççĕ.

Хебей провинцин хĕвелтухăç пайĕнче 8-мĕш революцилĕ халăх çарĕн чаçĕсем „Йапонине хирĕçле пĕрлешӳлĕ партизансен çарне" организациленĕ. Ку çарта Таньшань тата Кайлан шахтисенчи шахтăрсем активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ.

Партизансем, Çурçĕр Китайпа Маньчжурипе çыхăнтарса тăракан питĕ кирлĕ магистраль пулса тăракан Бейпин—Мукден чукунçул пайне атакăласа, пуйăссем çӳресси час-часах чарса тăраççĕ, йулашки вăхăтра партизансем Йапони-10 пуйăсне ытла пысăк крушени тунă.

Йут çĕршывсенчи вăрçă сăнавçисен çведенийĕсем тăрăх, Хебей провинцин хĕвелтухăç пайĕнче, Бейпин—Мукден чукунçул районĕнче, партизансен 30 пинрен кайа мар шутланаççĕ. Цзйансу провинцин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнчи хăшпĕр уйессенче те партизансен пысăк отрйачĕсем пур. Партизансем кунсеренех чукунçула темиçе вырăнта та сийен тăваççĕ. Йапонĕцсен тĕп бази пулса тăракан Çуйчжоу çине,—унта çичĕ пинрен кайа мар Йапони çарĕсем тăраççĕ,—партизансем йулашки икĕ эрне хушшинче темиçе хутчен тапăнса хула çумĕнчи чукунçул линине йĕркерен кăларнă. Августăн 29-мĕшĕнче партизансен отрйачĕ Çуйчжоу хулине вăйпа кĕрсе виçĕ сехет хушши урамсенче вăйлăн çапăçнă. Цзйансу провинцин çурçĕр пайĕнче 22 уйеса партизансем контроль туса тăраççĕ. Çавăн пекех Цзйансу провинцин хĕвелтухăç пайĕнче те партизансем виçĕ уйеса Йапони çарĕсенчен тасатнă.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

❖ Кийĕвра В. И. Ленинăн тĕп музейĕн филиалĕ уçălнă. Малтанхи виçĕ кун хушшинче унта ултă пин çынна йахăн пырса курнă.

❖ Çĕнтăбĕрĕн 1-мĕшĕнче, вĕренӳ çулĕ пуçланнă кун, Бурйат-Монголинчи шкул ачисемпе пионерсем пит чаплă парне илнĕ—ачасен „Костер" йатлă хаçатăн пĕрремĕш номерĕ тухнă. Хаçат пит те илемлĕ, икĕ тĕслĕ сăрпа пичетленсе тухнă.

❖ Çĕнтăбĕрĕн 1-мĕшĕнче Кийĕвра Украинă СС Республикинчи опĕрăпа балетăн Ленин орденлĕ академи театрĕнче сезон уçăлнă. Чи малтан „Щорс" йатлă опĕрă лартса кăтартнă. Граждан вăрçин легендарлă геройне чаплăн кăтартакан опĕрăна театрти сынсем хавасланса пăхнă. „Щорс" опĕрăн музыкине Лятошинский композитăр çырнă.

❖ Воронеж облаçĕнчи Борисоглебски, Грибановски тата Песковски районĕсенчи колхозсем енотсем ĕрчетеççĕ. Ку тĕлĕшпе йатарласах 16 фермă тунă, вĕсенче 550 енот пур. Çав фермăсем пысăк тупăш параççĕ.

(ТАСС).

Мускав—Владивосток—Мускав маршрутпа хăвăрт вĕçмели рейс

Çĕнтăбĕрĕн 2-мĕшĕнче 16 сехет те 45 минутра Мускав аеропорчĕн вĕçев хирĕнче Мускав—Владивосток—Мускав маршрутпа хăвăрт вĕçмели чаплă рейсăн финишĕ пулнă. Граждăнла сывлăш флотĕн ђотчикĕ Тӳтăйĕв йулташ бортмеханик-радист Калашникăв йулташпа „ПС-40" маркăлă хăвăрт вĕçекен çĕнĕ почта самолетĕпе кайламайла 16.380 километр хушăна 53 сехет те 40 минут хушшинче вĕçсе тухнă.

Тӳтăйĕв ђотчикăн Çĕпĕр магистралĕ тăрăх иртнĕ пархатарлă рейсĕ опытлă вĕçевсенчен пĕри пулса тăрать.

Çанталăк условийĕсем питĕ те начар пулнă пулин те, ђотчик Тӳтăйĕв йулташпа бортмеханик Калашникăв йулташ хăйсен задачине питĕ анăçлăн пурнăçа кĕртнĕ. Вĕçев вăхăтĕнче сехетри вăтам хăвăртлăх 305 километр пулнă, çав вăхăтрах хăшпĕр участкăсенче (Самаран, Нерчинск—Иркутск участкăра) сехетри хăвăртлăх 350 километра çитнĕ.

Самолет йĕркелĕ рейса хăшпĕр хуласенче (Хусан, Свердловск, Омск, Новосибирск, Иркутск тата ыт.) анса ларнипе иртернĕ.

Тӳтăйĕв йулташ вĕçевĕ практикă йенчен питĕ пысăк вырăн йышăнать. Совет Сойуза Геройĕн Коккинаки йулташăн хаlиччен пулман чаплă рейсĕ хыççăн Тӳтăйĕв йулташ вĕçевĕ çывăх вăхăтрах центра Инçет-Хĕвелтухăç хушшинче хăвăрт вĕçекен самолетсен йĕркелĕ вĕçме пуçласси шанмалла парать.

„ПС-40" маркăлă хăвăрт вĕçекен почта самолечĕсем Мускавран Владивостока тата Владивостокран Мускава почтăна иккĕмĕш куннех çитерме май параççĕ.

(ТАСС).

Колхозри ветеринар

Колхозниксем умĕнче унăн ĕçĕ хисеплĕ, ун ĕçĕ кăна мар, вăл хăй те колхозниксем хушшинче хисеплĕ çын. Куславкка районĕнчи „Çĕнтеру" колхозра Çемен Васильевич ветеринар пулса ĕçлеме тытăннăранпа пилĕк çул иртрĕ. Пилĕк çул хушши вăл колхоз лашисене, фермăри ĕнесене тата колхозниксен выльăхĕсене тĕрлĕрен чирсенчен сыватать. Çавăнпа та хисеплеççĕ колхозниксем çулĕпе вăта, ĕçпе çамрăк ветеринара.

Васильев йулташ нумай вĕренмен çын мар. Малтан вăл Куславккари ветпункт çумĕнчи пĕр уйăхлăх курсра вĕреннĕ, унтан вара районри колхоз шкулĕнче колхозри ветеринарсен курсне пĕтернĕ.

Хăйен пĕлĕвне хăпартассишĕн вăл тăрăшать. Йаланах выльăх чирĕсем çинчен çырнă кĕнекесем вулать. Вĕренме ăна ĕçре пулса иртекен опытсем те нумай пулăшаççĕ.

Кашни кунах ун патне колхозниксем пулăшу ыйтма пыраççĕ. Вăл çийĕнчех чирлĕ выльăх патне кайса, ăна кирлĕ пулăшу парать.

— Нумай пулмасть,—тет Çемен Васильевич,—ман пата Йупсарти Молотăв йачĕпе тăракан колхозри колхозник И. Москалев йулташ хăйĕн ĕни сасартăк вĕри чирпе чирленипе пулăшу ыйтма килчĕ. Ĕнен температури вăйлă çӳлеччĕ, унăн çĕчĕ вĕриленсе сап-сарă пулса тухатчĕ. Çийĕнчех кайса ветеринари йенчен кирлĕ пулăшу парсан, ĕне часах сывалчĕ.

Ал. Раскай.

Аванспа тырă валеçеççĕ

Шупашкар районĕнчи Кагановйч йачĕпе тăракан колхоз авăн çапса пĕтерчĕ, çултерстăвана тырă парса татнă. Хаљ колхозниксем ĕçкунĕсем тăрăх авансла тырă илеççĕ. М. Анисимăв колхозник çемйи колхоз ĕçĕнче йаланах тăрăшса ĕçлет. Ку вăхăтчен Анисимăв çемйи 600 ĕçкунĕ тунă. Çав ĕçкунĕсем тăрăх ку çемйе авансла 95 пăт тĕштырăпа илчĕ. Çавнашкалах ытти колхозниксем те кăçал ĕçкунĕ тăрăх тĕштырă нумай илеççĕ.

Кагановйч йачĕпе тăракан колхоз йалхуçалăх ертел уставĕнче кăтартнă фондсене тума тытăнчĕ.

А. Моисейĕв.

Çекцисем лайăххăрах ĕçлеме пуçларĕç

ИШЛЕЙ. Тивĕш йалсоветĕ йу-сыснасем çител ĕклех туйанна. Йулашки вăхăтра çекцисемпе ĕçлессине вăйлатса пуçларĕ. Çекцисен ĕçĕсем çинчен президиум ларăвĕсенче отчетсем итлет, вĕсен ĕçне тĕрĕслесех пырать. Чылай ыйтусене президиум ларăвĕнче йе пленумра пăхса тухиччен малтан, çекци членĕсен ларăвĕсенче сӳтсе йаваççĕ.

Финанс, суту-илӳпе хатĕрлев, выльăх-чĕрлĕх, çыхăнупа çулсем çекцисен ĕç планĕсем пур. План тăрăх, çекци бюро ларăвĕсем, çекци членĕсен ларăвĕсем пулаççĕ. Çекцисен ĕçне йал активне анлăн хутшăнтарнă.

Çавăн пекех хатĕрлев çекци те йалсоветри тĕрлĕ хатĕрлевсен планĕсене тултарассишĕн тăрăшать. Çекци ларăвĕсенче хатĕрлев агенчĕн отчетне итлеççĕ. Çекци членĕсем масса хушшинче калаçусем иртерсе, килĕрен çӳресе хатĕрлев агентне ун йалти кулленхи ĕçĕнче пулăшса пыраççĕ.

Хатĕрлев çекци пуçарса ĕçленипе çăм хатĕрлес плана йалсовет пĕтĕмпех тултарнă. Çавăн пекех çу хатĕрлес плана та тултарса çитерипе пĕрех. Аш-какай хатĕрлевĕн планне 75 процент тултарнă. Тĕрлĕ хатĕрлевсенче çекци членĕсем хăйсем парăмсене вăхăтра парса татнипе ыттисене ырă пример параççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх çекцинче фермăсене ĕçлекенсем, конюхсем пуртепĕрех тăраççĕ. Иртнĕ çулта сысна фермине пысăк çитменлĕхсем пулнă: чир сарăлнипе сыснасен шучĕ хытă чакнă. Çекци вăл вăхăтра йапах ĕçленĕ.

Хальĕ ĕç пачах урăхла. Фермă сыснасем ĕрчетес плана анăçлăн тултарса пырать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес план йалсовет тăрăх те аван тулса пырать. Арăтлă вакăрсем, ĕне тата сысна çитĕнтерессипе кăçал тăрăшса ĕçлет.

Сулăр çекцийĕ те кăçал иртнĕ çулхинчен аванрах ĕçлеме пуçларĕ. Йалсовет чул, хăйăр турттарас плана тултарнă. Çул такăр, ăна уçукпа йакатса тăраççĕ. Кăçал пĕр кĕпер тата 5 çăл тунă.

А Б.

Мускава кайса килтĕмĕр

ИШЛЕЙ районĕнчи финанс пайĕ мана Кăшавăш йалсоветĕнче налог агенчĕ пулса ĕçлеме уйăрчĕ. Ку пысăк ĕç иккенне малтанах лайăх тавçăрса илтĕм. Пăлах ĕнтĕ, укçа-тенкĕ пухас ĕçре пĕчĕк çеç ĕçлесен нихăçан та плана тултарас çук. Çакна шута илсе, йалсовет активĕпе, финанс çекци членĕсемпе пĕрле ĕçлетĕп. Укçа-тенкĕ пухас план мĕнле тулса пынине финанс çекци ларăвĕсенче сӳтсе-йаватпăр. Йалсовет пленум ĕç ларупăн, унта ĕç мĕнле пыни çинчен калаçа паратăп. Йалсоветĕ пĕрле пулăшса пырать.

Çавăнпа ĕçлесе пынипе пула, укçатенкĕ пухас ĕçре тĕпренех лайăхлатрăмăр. Кăшавăш йалсоветĕнче илсен, иртнĕ çулта пухса пĕтерейман парăм (культсбор, страховка, йалхуçалăх налогĕ) 11 пин тенкĕ шутланнă. Çак парăма пухса пĕтерес ĕçе пĕтĕм вăйа хутăм, чылай укçа пухса патăм. Хальхи ку йенĕпе пурĕ 1 пин те 21 тенкĕ анчах пухмалла йулчĕ.

Çак кунсенче епĕр Мускавра, РСФСР Финанс Халăх Комиссариачĕнче пултăмăр. Сойузла Республикăна кĕрекен пур республиксемпе облаçĕсенчен тата крайсенчен те финанс отличникĕсем пухăннă кунта. Пире налогсен пайĕн начальникĕ Барабан йулташ йышăнса илчĕ. Ăна хамăр мĕнле ĕçлени çинчен каласа патăмăр. Пĕр-пĕрин ĕçĕпе паллашрăмăр.

Финанс отличникĕсене премисем пачĕç. Мана уйăхри ĕç укçи чухлĕ преми пачĕç.

Налог агенчĕ И. Е. Гераçимăв.

Ĕçре ӳснĕ агент

Петров Иван Вăрман-Йенеш (Шăхасан р.) йалсоветĕн финанс çекци членĕ пулнă. Кунта вăл укçа-тенкĕ ыйтăвне тĕплĕн паллаша çитнĕ. Укçа-тенкĕ пухас ĕçре йаланах хастарлăн ĕçленĕ.

Петров йулташа пысăк ĕç шанса пама пулать тесе, ăна налог агенчĕ пулса ĕçлет. Виççĕмĕш кварталти финанс планне тултарассишĕн лайăх ĕçлесе пырать. Вăрман-Йенеш йалсоветĕнче илсен 3-мĕш кварталта 6.500 тенкĕ пухмалла, августăн 30-мĕшне 6028 тенкĕ пухса плана 92 процент тултарнă.

Н. Михайлăв.

Лесьă Украинкă

(ЙУЛАШКИ)

липе хаклать. Çĕршывăн чи пархатарлă ывăлĕсенчен пĕри—Николай Островский те çакăн пек пултаруллă пурнăçа пурăнса иртерчĕ. Вăл, тăвăлра çуралнă çĕр, етемлĕхе хурçă мĕнле хĕрсе пыни çинчен, большевик халăх вилĕмсĕрлĕхне ĕненсе тăнă туйăм хурлăхсене çĕнтерни çинчен каласа пачĕ.

Алăсăр-урасăр тăратса хăварсан, туберкулез Лесьă Украинкăн ӳпкисене те вăрса тытнă. Сывлăшне аран-аран çавăрса, йуллă çурсе, кроват çинчен тăраймасăр выртнă вăхăтра пысăк пултарулă поэтессă хăйĕн вилес умĕнхи, вĕçлеймесĕр йулнă драмăн планне тунă. Драмăн шухăшĕ çакăн пек: Александрийăн аслă çинĕ Феокрит изукĕ çĕнтересçе ĕненет. Христианствăн çулпуçĕсем халăх хушшинче саракан тĕне хирĕç çапăçакан учонăйăн пăхăнманăлăхне тата хăйулăхĕпе тăрăхса, çитнĕ христиансен тискер фанатисĕмĕ Феокрита хĕсĕрленĕ. „Йăлăнтарнă" йăрсĕнĕçе тĕрмене хупаççĕ. Унăн библиотекине пĕтĕмпех тустарса пĕтермеле, çунтарса йамала тăваççĕ. Анчах Феокритăн çамрăк ачисем библиотекăран вăшшĕ чи хаклă алçырăвĕсене илсе хуларан тухса кайаççĕ те, çеçенхир варринче чарăнса тăраççĕ. Хĕвел тухнă куранат. Ачасем хăйсем илсе килнĕ хаклă пурăлăх çеçенхир хăйăрĕ айне пытарса хураççĕ, „хăйсем чĕркуçленсе ларса, аллисене хĕвел патнелле часса çавăнла калаççĕ: „Хĕвел! Хăтар ес пирĕн пурлăха, сана тата ылтăн çеçенхире шанса паратпăр ăна!" Вăхăт çитĕ, етемлĕх ăсхаклăлĕн вут çинче çунтарса йарассинчен çăлакан çынсем хăйăр ăшĕнче тупĕç те тĕлĕнĕç, вĕсемпе пуйанлĕç."

Лесьă Украинкă вилес умĕн пархатарлă хунă шухăш, çут хĕвел пур-пĕрех тухассине, етемлĕхĕн хăйулла ăс-тăнĕ туса хăварнă йапалисем упранса йуласси шанчăкне тăнин хĕлхемĕсемпе уççăн çутăлнă шухăш халĕ пушшех те пурăнан анлăнулă. Фанатиклă тĕксĕм Александрийăн вучĕсем Берлин площадĕсенче тата та тискертерех, тата та пӳтсĕртерех çулăмсемпе çунма пуçларĕç. Анчах вĕçсем етемлĕхĕн шухăшĕсене çунтарса пĕтереймĕç.

Çеçенхир хăйăрĕ айне пытарăнман хакалăхсем, етемлĕхĕн çĕнĕ хĕвел çуттипе йалтăртатса тăракан паха ĕçĕсене социализмăлă çĕршывăн халăхĕсем тимлĕн тăхласа усраççĕ.

Сталин хĕвелĕ етемлĕхĕн ирĕклĕ шухăшĕсене чăнлăхне çиреппĕн сыхласа тăрать. Çак хĕвел айĕнче ирĕке тухнă Украинă халăхĕн чи пархатарлă поетессийĕ—Лесьă Украинкăн йачĕ те çĕнĕлле çутăла парĕ.

Микола Бажан.

Хаçатсенчен

Петр Великий çурчĕ

Кийĕв хулинче Петр Великий патша пурăннă çурт пур. Вăл çуртра Петр Великий 232 çул ĕлĕкрех пурăннă.

Çак çурт подвалĕнче çакăн пек çырнă хăма тупнă: „Сей дом построен в 1704 году. В нем имел пребывание с 5 июля по 20 августа 1706 года царь всея России, самодержец Петр Первый Всероссийский".

(„Горьковская коммуна").

Радиоçурт

Куйбышĕв хулинче 15 пин тваткалметрлă радиоçурт тăваççĕ. Халĕ ăна йăкатса хитрелетеççĕ, ку ĕç валли пĕр мĕлйун тенкĕ укçа уйăрнă.

1939 çулхи йанварĕн 1-мĕш тĕлне радиоçурта пĕтĕмпех туса пĕтерме палăртнă.

Çуртăн çӳлти икĕ хутĕнче радиовещани студийĕсем вырнаçаççĕ. Вĕсене техникăн йулашки çитĕнĕвĕсем тăрăх тăваççĕ.

(„Волжская коммуна").

Кашни сехетре

Францире туха тăракан „Роте фане" хаçат пĕлтернĕ тăрăх, пĕтĕм тĕнчере кашни сехетре 5.400 çын çуралать, 4800 çын вилет, 114.000 телеграмма параççĕ, 176 тонна табак туртса пĕтереççĕ, 7000 автомашина туса кăлараççĕ.

(„Красная Татария").

15 колхозница отпуск илнĕ

Тойкилтĕ йалсоветĕнчи „Çĕнĕ пурнăç" колхозра (Тутаркас районĕ) йавăр çын пирки 15 колхозницă отпуск илчĕç. Ĕçхалăхне телейлĕ те çавăнлăла пурнăç туса панăшăн колхозницăсем Сталин йулташа саламлаççĕ.

И. Скворцов.

Бригадăсенчи агитатăрсем

ШĂХАСАН. „Пинер" колхоз уйри тырпулсене кĕске срукра тата пысăк пахалăхпа пуçтарса кĕчĕ. Кунта колхозниксем хушшинче культурăлă-массăллă ĕçе тимлĕн туса пыни те пысăк вырăн йышăнчĕ. Тырă вырнă вăхăтра кашни бригадăрах çтена хаçачĕ тухса тăнă.

Бригадăсенчи агитатăрсем—Иегорăв, Йакимăв, Лукин т. ыт. йулташсем колхозниксем хушшинче Испанипе Китай халăхĕсен паттăр кĕрешĕвĕ çинчен, Йапони войенщинин пирĕн Инçет-Хĕвелтухăç чиккисене пăсса, ирсĕр провокаци туни çинчен, пирĕн пархатарлă Хĕрлĕ Çарпа Сталинла авиаци çинчен калаçусем туса иртернĕ.

Кусемсĕр пуçне, тырă вырнă вăхăтра йала виçĕ хутчен саслă кино пырса кăтартрĕç. „Волочаевские дни" фильма 350 çын, „Балтийцы" фильма 200 çын курчĕç. Лайăх кинокартинăсем колхозниксен ĕçри хастарлăхне хавхалантараççĕ.

В Саватникăв.

Аптекăра çĕнĕлле ĕçлеме тытăнчĕç

Çĕрпӳри аптекă çурчĕ иртнĕ çулсенче пăчă та тăвăр пулнă. Емел илме пыраканăн аптекăн 40—50 çынран ытла кĕреймен, сывмарнисен, пĕлăх, ларас килнĕ. Кунта ларса канмалăх вырăн та çителĕклĕ пулман. Пĕр çăмахра каласан, иртнĕ çулсенче аптекăра йĕрке сахал пулнă.

Кăçал Çĕрпӳри кивĕ аптекă çуртне пăсса 200 çын вырнаçмалăх çĕнĕ аптекă çурчĕ туса лартрĕç. Аптекăна пыракансем валли ларса канма тенкелсем çителĕклĕ хатĕрленĕ. Тумтирсене çакмалли вешалкăсем тунă тата вăхăта усăлă иртерме хĕрлĕ кĕтес йĕркеленĕ. Хĕрлĕ кĕтесре тĕрлĕрен хаçат-журналсем, шашкă шахматсем пур.

Кунсăр пуçне аптекăра ĕçлекенсен пурнăç условийĕ те лайăхланчĕ. Вĕсем пурăнакан общежитине йусарĕç, кашни работнике валли уйăрăм пӳлем туса пачĕç. Аптекă ĕçне йĕркелесе йама мĕн пурĕ 30.000 тенкĕ расхутланă.

Иртнĕ çулсенче аптекăра пĕр çемĕ кăна ĕçленĕ, хаљ икĕ çемĕ ĕçлет.

А. Иванов.

100 çынна трахомăран сыватрĕ

Вăрманкасри (Вăрнар р-нĕ) трахпунктра ĕçлекен трахоболнице А. Андрейева трахома пĕтерессине тăрăшса ĕçлет. Трахомăлисене шута илсе списук тунă. Çав списук тăрăх Андрейĕва йулташ трахомăпа чирлисене патне килĕсене çӳресе емлелет.

Иртнĕ çулта Вăрманкасра трахомисем 150 çын пулнă. Андрейĕва 100 çынна трахомăран сыватнă. Çĕнĕ çулччен мĕтĕмпех те сыватса çитерме шутлать.

А. Майорăв.

„НА ОКРАИНЕ, ГДЕ-ТО В ГОРОДЕ..."

Таксанхи пĕр романсра çамрăк хĕр „на окраине, где-то в городе, я в рабочей семье родилась" тесе йурлать. Çакăн йевĕрлĕ Глеб Успенский те хăйĕн „Нравы Растеряевой улицы" очеркĕсенче хулари Растеряйĕва урамĕ пычăкла, касăсенче тĕттĕм тата начар килсуртсемпе уйăрăлса тăнине палăртать.

Ку „на окраине, где-то в городе" романса йурлама пăрахрĕç ĕнтĕ, хĕр те вăл романс çинчен манса карĕ. Текех „окраины, где-то в городе" вырăнсене тата Успенскийĕн „Растерйăйĕва урамĕсене" тупма хĕн.

Хуласем ӳснĕ. Социализмлă, культурăлă тата малала çĕнелсе пыракан хуласем пур. Хула йăритарăшĕнчи кĕсĕйе ишĕлсе анас пек тытăнса тăракан кивĕ, лапчăк çуртсем вырăнне, рабочи кварталĕсем, промышленнăç предприйатийĕсем тата шкулсем ӳссе ларнă.

Факт айăкра мар, Шупашкарта, хамăр республика столицинче, нумай тупăнать. Нумай хутлă çуртсене тăвасси хула тулашне кусрĕ. Хула сарăлать, пысăкланать.

Хулан хĕвеланăç йенче — Волгострой çурчĕсем. Вĕсенче рабочисем служащисен хватерĕсем. Ачапа ача амăшĕн сывлăх институчĕ. Республикăри дезостанци. Електростанци. Вăл Успенскийĕн ĕлĕкхи „Растерйăйĕва урамĕсене" çута парать. Унăн електровăйĕпе темĕнле йăвăр машинă та ĕçлет. Шупашкара шыв тăратать.

Хулан хĕвелтухăç йенче — авторемонт савучĕ. Пысăк резина савучĕн строительстви. Радиостанци. Радио тăрăх совет халăхĕн çывăх тусĕ Сталин çинчен, Сталинла Конституци çинчен тата ĕçхалăхĕн хăватлăхĕпе пултарулăхĕ, унăн телейĕ çинчен хунă йура йанăрать.

Сывлăша çăмăллăн çĕклене хăпарать.

— Ака,—тет,—пăх, республика хули çине! Мĕнле вăл ӳснĕ! Ун айĕн темиçе институт, рабфак, вăтам шкул, ача больници, амбулатори, темиçе ача сачĕ, кино, театр, çĕнĕ строительствăсем ирĕсе йулчĕç. Çĕнĕ чукунçул. Станцă.

— Пăх,—тет,—хула йепле культурăланать.

Ун айĕн урамсене лартса симĕслетнĕ йăвассем, хула варринчи сатсем иртрĕç. Хула урамĕсем, çурт та таса çипус тăхлăнса йулнă.

— Ура!—тет халăх çӳлеле пăхса,—çӳлерех, хăвăртрах тата инçерех вĕçĕр!

Республика столици производствăран уйăрмасăр темиçе училище хатĕрлет.

Шупашкар ӳсет. Кашни урамра тенĕ пек канализаци пырать. Хулан пысăк урамĕ асфальтпа витĕнет, чылай урамсенче торцовка сарнă.

Хĕр халĕ Аслă Атăл хĕррипе тухса тăчĕ. Анлă кăкăрĕпе усăмлăн сывласа йурласа пуçларĕ:

„... Я другой такой страны не знаю,
Где так вольно дышит человек..."

ИВ. МОСЕЙĔВ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

СУТУ-ИЛӲ, ПРОМЫШЛЕННĂÇ, Государствă учрежденийĕсене тата ПРЕДПРИЙАТИСЕНЕ

„ТОРГОВО-ПРОМЫШЛЕННЫЙ СПРАВОЧНИК ЧУВАШИИ"

йатлă журнал пичетрен тухнă. Вырăсла тата чăвашла пичетленĕ.

ИЛЕС ТЕКЕНСЕН

КОГИЗ ăн Шупашкарти кĕнеке магазинĕсенчен ыйтмала, районсен—Чăвашсойузăн Канашри Культбазинчен ыйтса илмеле.

Справочник хакĕ 10 тенкĕ.

Тираж ытлашши мар пирки (1000 екземпляр) заявкăсене васкарах памала ыйтатпăр.

„Чăваш Коммунĕ" тата „Красная Чувашия" издательстви.

Августăн 27-мĕшĕнче, çĕрле, Шупашкар районĕнчи Алымкасси йалĕнчен 1 километра тарнатăс

кӳлнĕ лаша пăрахса тарнă

Тĕсĕ—шупка хĕрлĕ, ĕнерчĕк вырăнне шурă вырăнсем пур. Кĕсре, 15 çулта, хӳрине касса, çилхи кĕске йенелле.

Пĕлекенсен çак адреспе пĕлтермелле: колхоз „Кувшин", Анат-кассинский с.-с. Чебоксарского района.

Çĕнтăбĕрĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа Шупашкари саслă кино-театра

саслă, документлă, çĕнĕ фильм

Песня молодости

кăтартаççĕ

СЕАНСЕМ: 6, 8, 10 сехетсенче кăçалхи пуçланаççĕ.

Касса 3 сехетрен уçă. Дирекци.

2—2

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илме хаксем: пĕр уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Подписка çынсем уйрăмĕсем, почтовщиксем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 465 — Гор. Чебоксары, типография № 1 Чув. шполиграфтреста, заказ № 711, ф. б. 58×94 п. л.